## Раççей Патшалăх Думинче Чăваш Республикин кунĕсем иртрĕç • 3 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш хĕрарăмĕ

18(888) №, 2015, çу/май, 16

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

• Çĕмĕрĕлмест, çука хăвармасть... 3 стр.
• Хутăш йăран. 8 стр.
• Саккунсăр арăм – арăм мар. 9 стр.
• Çĕнтерӳ парачĕсен историйĕ. 11 стр.

## Хаклă ентешĕмĕрсем!

Сире Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ ячĕпе чунчĕререн саламлатăп! Çак паллă уяв çемьен пĕлтерĕшĕпе хаклăхне, вăл обществăн пахаран та паха пайĕ пулнине палăртать.

«Патшалăх вăл – пысăк çемье, çемье вара – юрату çинче тытăнса тăракан пĕчĕк патшалăх», – пĕлтерет халăх ăсĕ. Юрату, пĕр-пĕриншĕн тăрăшни, пĕрне-пĕри хисеплени, шанни, ăнланма тата каçарма пĕлни – питех те пĕлтерĕшлĕ çак паха енсем çирĕп те туслă çемьери хутшăнусене йĕркелеççĕ. Çирĕп çемье – сывă обществăн, Чăваш Енпе Раççейĕн телейлĕ пуласлăхĕн шанчăклă никĕсĕ.

Чăваш Республикинче çемье енĕпе тытса пыракан патшалăх политики çемье институтне çирĕплетессине, ача амăшĕсемпе ачалăха пулăшассине, нумай ачаллă çемьесене социаллă хӳтлĕх парассине пысăк вырăна хурать. Республикăн амăшĕн капиталне тӳлетпĕр, виççĕмĕш е ун хыççăнхи ачасемшĕн вĕсем виçĕ çула çитиччен кашни уйăхра пособи паратпăр, нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсемпе тӳлевсĕр тивĕçтеретпĕр.

Медицина тата вĕренӳ енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕ лайăхланать. Юлашки çулсенче республикăра 43 ача сачĕ хута кайнă, шкул çулне çитмен ачасем валли çирĕм пин çурă ытла вырăн йĕркеленĕ. Шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсене çӳреме черетре тăракан икĕ çултан аслăрах мĕнпур ача валли çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тĕлне асăннă пĕлӳ çурчĕсенче вырăнсем хатĕр пулĕç.

Пирĕн пĕрлехи ĕçĕмĕрĕн ырă кăтартăвĕсене пула Чăваш Енре нумай ачаллă çемьесен шучĕ 25 процент пысăкланчĕ тата халăх йышĕ хăй тĕллĕн ӳссе пыни виçĕ çул ĕнтĕ шанчăклăн палăрать.

Çамрăксемшĕн лайăх тĕслĕх пулса çемье вучахĕн çулăмне вуншар çул типтерлĕн сыхласа упракан мĕнпур çынна чунтан тав тăватăп. Кашни килте яланах тăнăçлăхпа килĕшӳ хуçалантăр, ачасен янăравлă кулли илтĕнсе тăтăр!

Сире юратупа чун хавалĕ, ырă шанчăк тата ăнлану, телейпе ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ** **М. ИГНАТЬЕВ.**




Автор сăнӳкерчĕкĕ.

## Терентий Дверенин тата унăн «ачисем»

### Халăх культурине тĕнче шайĕнче сăнлакан чăваш пуканисем вырăнти влаçа кăсăклантармаççĕ

Раççейре кăна мар, тĕнче шайĕнче палăрма ĕлкĕрнĕ Терентий Дверенин аласти пирки пирĕн хаçатсенче пĕрре мар çырнă. Телекурав та унăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă. Çавăнпа та республикăра ылтăн алăллă пукане ăсти пирки пĕлмен, илтмен çын çук та пулĕ. Геннадий Иванов-Орков «Терентий Двереннинăн чăваш тĕнчи» ятпа хитре кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Эпир те унăн тĕлĕнмелле ĕçĕпе республикăри куравсенче пĕрре мар паллашнă. Раççей хаçачĕсенче те Дверенин пултарулăхĕ пирки статьясем пичетленчĕç. Вăл Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнчи Çичĕпӳртре пурăнни пирки пĕлетпĕр-ха. Анчах та тăван килĕнче халĕччен те пулса курман. Тĕрĕссипе, çула тухма редакцие çитнĕ хыпар хистерĕ. Чăваш тĕнчекурăмне, йăли-йĕркине, культурине – мĕн сăпайланмалли пур: халăх ятне! – Тĕнче шайĕнче çĕкленĕ пуканесене упрама аластине тивĕçлĕ условисем йĕркелеме пулăшакан çук-мĕн. Аван мар çак хыпара тĕрĕслеме васкарăмăр. Терентий Парамонович хăй епле пурăнни те кăсăклантарчĕ: çулĕсен шучĕ çапах та сахал мар-çке. Çичĕпӳрте уйăх каяллах кайма пуçтарăннăччĕ. «Машинăпа çитме хальлĕхе çул çук, çуран утса кĕме тивет. Шыв-шур типсен килсен аванччĕ те», – терĕç ялти культура ĕçченĕсем. Ахальтен çапла каламан иккен. Çичĕпӳртре асфальт çул çук. Чул сарнине те асăрхамарăмăр. Терентий Дверенинпа пĕр-ик кил урлă ял тăрăхĕн депутачĕ Василий Волков пурăнать, вăл тата хуçалăх ертӳçи Владимир Кириллов тăрăшнипе çула кивĕ кирпĕч таткисемпе якаткаланă. Пылчăкра ашса тухма та çук пуль çав. Тĕп ял мар тесе вăхăтĕнче асфальт сармасăр хăварнă-ши? Тахçан ку тăрăхра хăмла та нумай туса илнĕ теççĕ. Уйра тăлăххăн ларакан юпасем тӳрех куç тĕлне пулчĕç-ха. «Симĕс ылтăнпа» Çичĕпӳрт Раççейре те палăрнă-мĕн. 20 çул каялла хуçалăх пĕтĕмĕшле лаптăкран 15 центнер типĕ хăмла туса илнĕ.

ÇЫРĂНТАРУ 2015
ХЫПАР

*Май уйăхĕн 14-мĕшĕнчен тытăнса майăн 23-мĕшĕччен*

«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2015 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн йӳнĕ хакпа çырăнтараççĕ

725,46 тенкĕ

315,48 тенкĕ

Çавăн пекех пирĕн кăларăмсене «Чăваш пичечĕ», «Советская Чувашия» киоскĕсенче тата редакцире çырăнма пулать



АНАТАЛЛА-ТĂВАЛЛА

# Терентий Дверенин тата унăн «ачисем»

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Пысăках мар ялта шăплăх хуçаланать. Унталла-кунталла кумакан техника та куç тĕлне пулмарĕ. Йăмралла Çичĕпӳрт симĕс пĕркенчĕкпе витĕннĕ. Çĕмĕрт çеçкин ырă шăрши сăмсана кăтăклать. Йĕри-тавра пĕве ку тăрăхра. Шапасем пĕр урам çурса кваклатни чунра ырă туйăм çуратать. Чиесем çинче каçăхса кайсах шăпчăксем юрă шăрантараççĕ. Тинех чăн-чăн çулла çитет апла. Çырма-çатра айккипе кукшапуç чечеке ларнă. Чăтлăхра пĕр чарăнми чăпар куккук авăтать. Унта-кунта тахçанхи пушă пӳртсем, кивĕ хуралтăсем ларнипе-ши е пĕчĕк те ансăр урамсене пула-ши, авалхи чăваш ялне аса илтерчĕ мана Çичĕпӳрт.

Урамалла икĕ чӳречеллĕ йывăç пӳрт умĕнче чарăнтăмăр. Кил умĕнче çӳллĕ-çӳллĕ йăмрасемпе çăкасем, ем-ешĕл çерем. Кунта Терентий Дверенин пурăнать. Çичĕпӳртри тĕслĕх библиотекăра 32 çул тăрăшакан Ангелина Кузьминапа пĕрле шала кĕтĕмĕр. Терентий Парамонович канма выртнăччĕ. Иртенпе пире кĕтсе ывăннă курăнать. Кăтăш пулнăскерне асăрханса вăратрăмăр. Кашни кунах ирхи пиллĕкре тăрать Терентий пичче. Вăрансанах сурăхĕсемпе чăхчĕпне апатлантарма васкать. Унсăрăн ял çынни хăйне лăпкă туймасть, картишĕнчи вылăха вăхăтра çитермелле-çке. Кайран вара анкартине тухать. Пĕр минут та ахаль ларма хăнăхман 96 çулти ватăн чунĕ чăтмасть çав. Халь те ав вырăн çинчен тăрса пит-куçне сивĕ шывпа уçăлтарчĕ те, енчен енне уткалама тытăнчĕ. Ниепле вырăн тупаймасть. Хăнасене хапăл вăл. Хăйне ыр сунакансемшĕн, уйрăмах шкул ачисемшĕн, тем пекех хĕпĕртет ăшă кăмăллăскер. Чей ĕçтересшĕн хыпкаланать Терентий Парамонович. Çав вăхăтрах сад пахчипе, музейпе те паллаштарасшăн.

### Улмуççисем хăраççĕ

Илемлĕ те пуян сад ĕрчетнĕ Терентий Парамонович. Улма йывăççисене хăй сыпнă. Вун-вун панулми сорчĕ, ир пулаканни, çăварта ирĕлекенни, хура кĕркунне çеç сĕтекленекенни, вăрахчен упранаканни... Çакăнтах сырлан, исĕм çырли, кашкăр çырли /жимолость/, хăмла çырли çитĕнет. Кĕлчечекпе пионсемсĕр пуçне пӳртре ӳсекен чечексем те вырăн тупнă пахчара. Вĕсене Терентий пичче ятарласа кăларса лартнă, кĕркунне вара çамрăк туратне касса кĕрсе тымарлантарать.

– Улмуççисем темшĕн хăраççĕ. Мĕн çитмест-ши, ватăлаççĕ-ши? Çынсен мĕнле-ши? – улма йывăççисем çинчен куçне илмерĕ садра Терентий Парамонович. Эх, мăнтарăн, пахчари йывăççемшĕн те питĕ кулянать. Мăнукĕсене, вĕсен ачисене кашни кĕркуннех çимĕçпе хăналама хăнăхнă-çке.

### «Чĕрĕ пекех туйăнаççĕ»

Терентий Парамонович 85 çул тултарсан пуканесене «чун кĕртме» тытăннă. Вăрçăра танкист пулнăран чи малтан танк ăсталанă вăл. Ăна район музейне парнеленĕ. Юратнă мăшăрĕ пурнăçран уйрăлса кайсан пӳрт пушанса юлнине туйса çĕрĕн-кунĕн каскалама тытăннă. «Хамăн ватлăха илемлетес, чуна пусарас тесе йывăçпа ĕçлеме пикентĕм. Хĕллехи вăхăтра мĕн тумалла тата? Мĕнпе те пулин йăпанмалла-çке ват çыннăн. Чăваш халăхĕн пурнăçне, аваллăхне сăнлакан композицисене хамах шухăшласа тупрăм. Çак кĕлеткесем мана чĕрĕ пекех туйăнаççĕ. Хам ăсталанине ĕненес те килмест халь. Эпĕ вĕсене темиçе пин тенкĕ сĕнсен те сутмастăп, «ачасемпе» уйрăлма мана питĕ шел», – чунне уçать Терентий Парамонович.

Çăварни эрнинче катаччи чупни, çĕр типсен çамрăксем вăййа тухни, чӳк туни, тырă вырни, авăн çапни, арманта ыраш-тулă авăртни, пир тĕртни тата ытти чылай пулăм сăнланнă унăн тĕлĕнмелле ĕçĕсенче. Александр Пушкин 1833 çулта Октябрьски ялĕнче чарăннă саманта та кăтартнă. Александр Сергеевич урампа утса пыракан тухьяллă чăваш пикине курнă та куç илмесĕр пăхса тăрать. «Вăрçă пуçланнă» композици тĕлĕнче чарăнчĕ те пĕр хушă шăпланчĕ Терентий Парамонович. Хура тумлă пуканесем кирек кама та кӳççуль кăларттараççех. Арçынсем вăрçа тухса кайсан пĕтĕм йывăр ĕç черчен хĕрарăмсем çине тиеннĕ. Вĕсен куçĕсенче – çĕр йăтайми хурлăх. Окоп чавнине, вăрман каснине, уйра ака тунине пуканесем сăнласа кăтартаççĕ. «Тылра тар тăкнă хĕрарăмсем» композици урлă Терентий Дверенин этемлĕхĕн черчен çуррине чунтан хĕрхенни, хисеплени палăрать.

Анкартинче, сарай хыçĕнче вутă хумалли пĕчĕк кĕтес пур. Çуллахи вăхăтра ялан çавăнта кăштăртатать Терентий пичче. Сулхăн çĕрте хĕвел те çунтармасть. Пĕчĕк çĕççине кăларать те чĕркуçленсе тунката çинче кĕлеткесем касать. Эх, калама çук селĕм-çке! Йывăç пуканийĕсен алли-ури те, пуçĕ те вылять.

### Пуканесем валли – ятарлă çурт

Чăваш халăхĕн пурнăçне сăнлакан йывăç пуканесене Терентий Дверенин малтан пахчара, мунчана аса илтерекен пĕчĕк пӳртре, упранă. Çурт хăпартнă чухне пĕренесем юлнă та – вĕсене ахаль вырттарас темен, купаласа лартнă. Кĕркунне вăрлăх типĕтме те, пахчаçимĕç, çурт-йĕрти япаласене хума та вырăн кирлĕ-çке ялта. Çаврăнкаламалăх та çук пĕчĕк пӳртре унăн ĕçĕсем вырнаçми пулнă. Маттур та тăрăшуллă хĕрĕсем пулăшнипе, хăй те çине тăнипе картишĕнче пуканесем валли шлакоблокран çĕнĕ çурт хăпартнă. Кунта экспонатсем валли вырăн чылай. Пластик чӳречесемлĕ пӳлĕмре çутă та çителĕклĕ. Шел, ăшă чăнласах çук – шăпах çакăн пирки пăшăрханса калаçнăччĕ алăстин пултарулăхне хаклакансем. Газ кĕртесси вара çăмăлах мар хальхи вăхăтра. Çуртăн аялти пайĕнче нӳхреп туса хăварнăран пăс, ăшă тухнипе мачча хăмисем те хăпăннă. Халь ăна çĕнĕрен юсама тивет. Хутман çĕнĕ çуртра температура та пĕрешкел мар, пĕрмай нӳрĕк тăрать. Хурт-кăпшанкă та нӳхрепрен ăшшалла тухнă. «Хĕллехи вăхăтра урамра та, çуртра та сивĕ. Пуканесемпе музейре вăрах киленме май çук», – пытармасть ялти библиотекарь Ангелина Валерьяновна.

Терентий Парамонович пуканийĕсене ăçтан кăна килсе курман-ши? 2008 çулта музейпе паллашнă хыççăн Китайран килнĕ Джинг ятлăскер журнала ăшă сăмахсем çырса хăварнă. Мари Элтан та хăнасем çитнĕ. Куславкка районĕнчи «Эткер» фольклор ушкăнне те килĕшнĕ экспонатсем. Терентий Дверенин пултарулăхĕпе Германи, Эстони, Итали турисчĕсем паллашнă. Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ районĕнчи шкулсенче тата Шупашкарти 5-мĕш гимназире вĕренекен ачасене те Терентий Двереннинăн «хăйне евĕр тĕнчи» тыткăнланă.

### Никама та кирлĕ мар

Ылтăн алăллă Терентий Парамонович хăйĕнчен мĕн килнине йăлтах тунă. Тĕнче шайĕнчи пуканесем валли ватлăхра çурт та хăпартса лартнă авă вăйĕ çитнĕ таран. Анчах та экспонатсемпе композицисене упрама ятарлă услови кирлех. Хĕллехи вăхăтра сивĕ çĕрте тăнă май çак тĕлĕнмелле чаплă, чăваш халăхĕн аваллăхне, историне, пурнăçне сăнлакан пуканесем кăвакарма пултараççĕ. Музее хутса ăшăтмалла тусан аван пулмалла. Паллă юрăри пек – пуррине упрама пĕлеймеспĕр, çухатсан çеç йĕретпĕр. Кĕрлĕ-çурлă вăхăтра, йĕпе-сапара урама пĕр машина та кĕреймест. «Юрать, хĕл кунĕнче урамсене тасатаççĕ. Темиçе çул каялла юр та хырмастчĕç-ха», – терĕç ял çыннисем. Шăп çак вăхăтра туристсем Çичĕпӳрте çитсе курас тесен Сĕнтĕрвăрри район администрацийĕ мĕн шухăшласа кăларать-ши?

Çак шухăш канăç паманран районти культура пайĕн пуçлăхĕпе Эльвира Упракинăпа çыхăнтăмăр. Шел те, хаçат корреспонденчĕн ыйтăвне хуравлама унăн вăхăчĕ те, кăмăлĕ те пулмарĕ. Шăнкăравласа чăрмантарни килĕшмерĕ курăнать. «Шухăшлама, йĕркеллĕ хурав пама вăхăт парăр мана», – терĕ хирĕç Эльвира Павловна. Ак хайхи, çӳлерех кăна çыртăмăр «мĕн шухăшласа кăлараççĕ-ши» тесе. «Шухăшласа» хуравлама чăнах та вĕренсе çитнĕ курăнать мухтавлă Кăйкăрăмăрăн ентешĕсем. Тӳрккес те кăнттам калаçуранах Çичĕпӳртри Дверенин музейĕ сĕнтĕрвăррисене пачах та кăсăклантарманни, унăн ĕçне тивĕçлĕн хакламанни палăрчĕ. Çак пĕчĕк ыйтăва хуравлама нумай вăхăт кирлĕччĕ-ши? «Эпир уйрăм çын çуртне хутса ăшăтма пултараймастпăр. Çул çуккине ăçта куратăр тата? Эсир, корреспондентсем, тĕрĕссине çырма тăрăшмастăр, япăххине кăна шыраса çӳретĕр. Ял çыннисен таçтан укçа-тенкĕ тупмалла? Çичĕпӳрт ялне çул сарма проект хатĕрленĕ, ăна республика программине кĕртнĕ. Çул валли пĕтĕмпе 10 миллион тенкĕ кирлĕ, республика 800 пин тенкĕ уйăрса панă», – çаплах хуравларĕ те телефонне хăвăртрах сӳнтерчĕ Шĕнерпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.Кириллов та. Владимир Витальевича та Çичĕпӳртри çул, пуканесене малашне мĕнле упрасси пирки ыйту пани килĕшмерĕ. «Çул çуккине ăçта куратăр?» – тенине вара пачах та ăнланмарăм. Хам кайса курман пулсан юрĕччĕ-ха.

### Ăслă йăх

Çапла калаççĕ вĕсем пирки ялта. Мăшăрĕпе Ольга Павловнăпа Терентий Парамонович тăватă хĕрпе пĕр ывăл çитĕнтернĕ. Шел, хĕрĕ Римма пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса кайнă. Олимпиада Терентьевна – техника наукисен кандидачĕ. Светлана Терентьевна – физикăпа математика вĕрентекенĕ. Валентина Терентьевна та нумай çул Çĕрпӳ районĕнчи Кăнарти шкулта математика учителĕнче ĕçленĕ. Халĕ тивĕçлĕ канура. Тăватă хĕрĕ те аслă пĕлӳ илнĕ. Ывăлĕ Михаил ашшĕне пăхса пурăнать. Мăшăрĕ Ольга Ивановна та аслă шкултан вĕренсе тухнă хыççăн нумай çул зоотехникре тăрăшнă. Тăлăх çитĕннĕ Терентий Парамонович вĕренме кайайман: çичĕ çулта чухне ашшĕ вилнĕ, вунтăватта çитсен амăшĕ пурнăçран уйрăлса кайнă. Терентий пĕчĕк шăллĕне Апполона пĕччене пăхса çитĕнтернĕ. Апполон Парамонович та çак ялтах пурăнать. 80 çултан каçсан вăл компьютер туяннă. Кашни кунах Интернета кĕрет, чăваш халăхĕн историне тĕпчет.

Танкпа Берлина çитнĕ Терентий Парамонович вăрçă çинчен калаçма юратмасть. «Пилĕк çул çапăçура пулсан та пĕр нимĕçе те вĕлермен, пăшалтан та пемен. Танк водителĕ пулнă эпĕ. Çын çине мар, хурт-кăпшанкă çине те алă çĕкленмест», – тет те калаçăва хăвăртрах пăрса ярать. Пуканесем çинчен сăмах пуçарсан вара ăшă куçĕ тӳрех ялкăшма тытăнать. «Ман ачамсем», – тет вăл вĕсене юратса.

**Елена АТАМАНОВА.**

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Юратнă ĕç киленӳ кӳрет

Акă Мăн Ямашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкула уçнăранпа 130 çул çитрĕ. Çак тапхăрта вăл чиркӳ, прихут, пуçламăш, çичĕ тата сакăр çул вĕренмелли шкул пулнă. 1994-мĕш çултан – вăтам шкул. Архив докуменчĕсенчен çакă паллă: 1885 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче Хучаш чиркӳ прихутне кĕнĕ Мăн Ямашра шкул уçăлнă. Ку таранччен таврари çичĕ-сакăр ялти 1650 ача пĕлӳ илнĕ унта, вĕсене 185 педагог вĕрентнĕ. Хăйсен ĕçне 30-40 çул парăннă учительсен хисепĕ 13-е çитнĕ. Чылайăшĕ çут тĕнчере çук та ĕнтĕ. Апла пулин те хăйсен кун-çулне çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парассипе çыхăнтарнăскерсене манмастпăр эпир.

Сăмахăма майĕпен паян та шкулта тăрăшакан Валентина Барановăпа Ольга Миронова çине куçарам-ха. Коллективри 17 педагогран чи аслисем вĕсем, чи опытлисем. Тĕрлĕ çулта иккĕшĕ те Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Ĕçлеме килсен вĕсене Яккушкăньпе Мăн Ямаш каччисем килĕштернĕ.

Профессие чунтан юратакан Валентина Павловна ачасене 42-мĕш çул вырăс чĕлхипе литератури вĕрентет.

– Суйланă ĕçĕн пĕлтерĕшне ăнланни, ачасене юратни, вĕсене тĕрĕс воспитани пама тăрăшни – ӳсĕм çăлкуçĕ. Ашшĕ-амăшĕпе тачă çыхăнса ĕçленин усси пурах. Ачасенчен чылайăшĕ вĕренӳре те, ытти конкурс-фестивальте те палăрать. Ку пире, паллах, савăнтарать. Малашне те вăй хурса ĕçлеме хавхалантарать, – тет Тури Вылăра çуралса ӳснĕ, 40 çула яхăн Яккушкăнь ялĕнче пурăнакан Валентина Баранова.

Мăшăрĕпе вĕсем 5 ача /икĕ ывăлпа виçĕ хĕр/ çуратса пурнăç çул çине кăларнă. Икĕ хĕрĕ амăшĕн çулне суйланă.

Ольга Миронова 55 çул каялла Хĕрлĕ Чутай районне кĕрекен Анат Çĕрпӳкассинче çуралса ӳснĕ. Тури Çĕрпӳкассинче сакăр çул вĕреннĕ хыççăн вунă çухрăмри Штанашри вăтам шкулта çӳренĕ. Хĕр пĕр хушă клуб заведующийĕнче те ĕçлесе пăхнă. Анчах чунĕ малаллах туртнă: Чăваш патшалăх пединститутне куçăмсăр майпа вĕренме кĕнĕ, çав хушăрах, 1979 çулта, пулас биолог-химик Мăн Ямаш шкулĕнче ĕçлеме тытăннă. Салтакран таврăннă Мăн Ямаш каччи Петр Миронов хĕре вĕçертмен. Çамрăк чунсем пĕр-пĕрне часах ăнланнă, туслă çемьере виçĕ хĕр çуратса ӳстернĕ, çĕнĕ кил-çурт туса лартнă. Иккĕшĕ те тивĕçлĕ кану çулне сывхараççĕ. Лăпкă та сăпайлă хĕрарăм ачисене 36-мĕш çул пĕлӳ парать.

**Геннадий САВЕЛЬЕВ.**
Элĕк районĕ.

ĔÇЛĔ ТĔЛПУЛУ

# Патшалăх Думинче – Чăваш Ен кунĕсем

**Çу уйăхĕн 12-15-мĕшĕсенче РФ Патшалăх Думинче Чăваш Ен кунĕсем иртнĕ**



Малтанах экономика политикин, инноваци аталанăвĕн тата предпринимательствăн комитечĕн ларăвĕ иртнĕ. Чăваш Ен çитĕнĕвĕсен куравĕ уçăличчен ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев РФ Патшалăх Думин председателĕн пĕрремĕш заместителĕпе, Раççей Олимп комитечĕн президенчĕпе Александр Жуковпа тĕл пулнă. Михаил Васильевич ăна республикăри социаллă пурнăçпа, экономикăри лару-тăрупа паллаштарнă, Европăн команда чемпионатне мĕнле хатĕрленнине каласа кăтартнă. «Раççей – спорт çĕршывĕ» форум вăхăтĕнче пирĕн патра хăнара пулнă Александр Дмитриевич республика спортпа туслă регионсенчен пĕри пулнине палăртнă.

Курава уçнă çĕрте политика паллă деятелĕсем, РФ Патшалăх Думин депутачĕсем тухса калаçнă. ЛДПР фракцийĕн ертӳçи Владимир Жириновский Чăваш Ене темиçе хутчен те килнине, кашнинчех хăйне килти пекех туйнине каланă.

Иосиф Кобзон та хăй нумаях пулмасть Чăваш Ене çитсе килнине аса илнĕ, регионта çамрăксене патриотла воспитани парас тĕлĕшпе нумай ĕçленине палăртнă.

РФ ПД вĕренӳ комитечĕн председателĕ Алена Аршинова чăвашăн тĕп пуянлăхĕ – культурăллă, вашават, ĕçчен тата пултаруллă çынсем пулнине çирĕплетнĕ.



Чăваш Енĕн социаллă пурнăçпа экономика потенциалĕн презентацине «Единая Россия» партин ертӳçи Владимир Васильев уçнă. Пысăк уяв йĕркеленĕшĕн республика делегацине тав тунă.

Михаил Игнатьев тухса калаçнă май республикăра халăхăн пурнăçне чи çӳллĕ шая çитересси тĕп тĕллев иккенне палăртнă. Журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май Михаил Васильевич çакнашкал мероприятисем инвестици пĕлтерĕшне ӳстерме пулăшнине çирĕплетнĕ.

– Пирĕн хамăр çинчен каласа кăтартма вăтанмалла мар. Республикăра пулса курнисем ăна юратнине систереççĕ. Çакă вара инвестици климатне лайăхлатмашкăн пулăшать, – тенĕ элтеперĕмĕр.

**Татьяна НАУМОВА.**

КИНОФЕСТИВАЛЬ

# Хăшне курар-ши?

***Çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче республикăра Пĕтĕм тĕнчери VIII кинофестиваль уçăлĕ. Унăн президенчĕ малтанхи пекех – Раççей халăх артисчĕ, "Мосфильм" киноконцерн генеральнăй директорĕ Карен Шахназаров. Анчах кăçал вăл "Анна Каренина" фильм ӳкерме пуçланине пула пирĕн тăрăха килеймĕ. Фестиваль хăнисем Шупашкарта, Етĕрне, Пăрачкав, Красноармейски районĕсенче куракансемпе тĕл пулĕç. Фильмсене ытти чухнехи пекех тӳлевсĕр кăтартĕç.***

Кăçал та наци киностудийĕсен ĕçĕсене тата илемлĕ фильмсене уйрăммăн пĕтĕмлетĕç. Илемлĕ фильмсене Анне статуэткăна тивĕçнĕ Юсуп Разыков сценарист, Ирина Рубанова киновед, Георгий Параджанов режиссер, Наталья Егорова актриса хак парĕç. Кĕске вăхăтрах 11 ĕç пахаламалла пулĕ вĕсен. Сахал йышлă халăхсен фильмĕсене Евгений Цымбал режиссер, сценарист, актер ертсе пыракан ушкăн тишкерĕ. Фестиваль вăхăтĕнче Раççейре, Финляндире, Хорватире, Казахстанра ӳкернĕ кинокартинăсемпе паллашма май пулĕ. Çавнашкалах чăваш режиссерĕсем çĕнĕ 3 ĕç кăтартĕç.

Кинофестиваль программине документ фильмĕсем, ачасем валли ӳкернĕ кинокартинăсем пуянлатĕç. Йăлана кĕнĕ "Кино каçĕнче" Любовь Орлова тата Григорий Александров çинчен каласа кăтартĕç. Ăсталăх класĕсем иртĕç. Сахал йышлă халăхсен Шупашкарти кинофестивалĕ çу уйăхĕн 23-мĕшĕччен тăсăлĕ.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

ПУЛĂШУ

# Сусăрăн пурнăçне лайăхлатма

***«Граждансене социаллă пулăшу парасси» патшалăх программине пурнăçа кĕртмешкĕн çĕршыв хысниннчен Чăваш Республикине 43 миллиона яхăн тенкĕ уйăрнă. Сăмах май, Раççей Правительстви 71 субъект валли 3 миллиард ытла тенкĕ пăхса хăварнă. Субсидипе сусăрсен пурнăçне лайăхлатма усă курĕç.***

Çавна май кăçал социаллă инфратытăмри 30 объекта хăтлăлатĕç. Укçана темиçе министерствăна уйăрса пама йышăннă.

Пĕлтĕр ку тĕллевпе Чăваш Республикине Раççей бюджетĕнчен 65,5 миллион тенкĕ куçарнă. Çав укçапа сывлăх сыхлав, социаллă хӳтлĕх, физкультурăпа спорт, вĕренӳ, культура объекчĕсенче çĕнĕлĕх кĕртме усă курнă. Унта сусăрсем хăйсене ирĕклĕ туйччăр тесе тĕрлĕ оборудовани вырнаçтарнă.

Чи малтан Шупашкарти халăха социаллă пулăшу паракан комплекс центрĕнче тата республикăри офтальмологи больницинче сусăрсене çĕнĕ условисем туса панă. Вĕсем кунти çăмăллăхсене хăнăхса пыраççĕ.

Патшалăх уйăрнă субсидипе халăха усă курмашкăн 4 троллейбус, 3 автобус туяннă. Çавнашкалах кӳмери сусăра хăпартакан ятарлă автобус илнĕ. Унсăр пуçне транспорт чарăнăвĕнче, çул урлă каçнă вырăнта вĕсем валли уйрăм условисем туса панă.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

ШУХĂШ

# Çĕмĕрĕлмест, çука хăвармасть...

**Марина ТУМАЛАНОВА**

**Шăрăхра пылак шыв та, квас та ĕçес килет. Ачасемпе урама уçăлма тухсан темиçе çĕрте чарăнса ăш хыпнине ирттеретпĕр. Пĕр хут усă курмалли савăта, паллах, çавăнтах пăрахса хăварма хăнăхнă – вăл пире текех кирлĕ пулмĕ. Пĕлтĕр çӳп-çап витри патĕнче пĕр хĕрарăма асăрханăччĕ. Вăл шăпах çав стакансене пуçтарса пырать. Çăвать-и, çук-и вĕсене – татăклăн калаймăн. Кайран çавăнта улма-çырла тултарса сутнине темиçе те курнă. Перекетлекен, кашни пуса шутлакан çыншăн иртен-çӳрен çаврăнса пăхни ним те мар. Уншăн енчĕкĕ хут укçапа тулни пĕлтерĕшлĕрех.**

**Çемьепе хула çывăхне шашлăка кайма пуçтарăнтăмăр. Каллех пĕр хут усă курмалли савăт-сапасăр çула тухаймăн. Пасарти темиçе уйрăма çитрĕмĕр – илсе пĕтернĕ. Юрать-ха лавккара юлнăччĕ вăл. Меллĕ вĕт: çав турилккесене темĕн те пĕр хума пулать. Кайран вараланнăскерсене çуса тасатас шухăш та çук, пуçтарса пăрахма çеç манмалла мар. Манпа вулакансем килĕшĕç: халĕ пластик савăт-сапа çут çанталăкра та, килте те, ĕçре те çав тери кирлĕ: çĕмĕрĕлмест, нумай вырăн йышăнмасть, çука хăвармасть. Çапах сывлăхшăн сиенлĕ мар-ши вăл?**

**Уильям Дартс американ иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенчех пĕр хут усă курмалли пластик стакан шухăшласа тупнă. Раççейре çĕн йĕркелӳ тапхăрĕнче кăна, уйрăм çынсем хăйсен ĕçне пуçарса ярсан, пластик савăт-сапа кăларма тытăнни паллă. Паян ăна пахалăхне кура виçĕ ушкăна пайлама пулать. Тупăш илме тĕв тунисем, паллах, чи йӳннине, апла тăк пахалăхсăррине, суйлаççĕ. Тĕнчере вара экологи ыйтăвĕсене тĕпе хурса икĕ уйăхра çĕрсе пĕтекен савăт-сапа кăларассине йĕркеленĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн вăл Раççее те çитĕ. Ун чухне пластик хатĕр-хĕтĕр хальхи пек купаланса выртмĕ.**

**Çапах хăшне илмелле-ха? "Çакăн йышши савăт-сапана тĕрлĕ япаларан тăваççĕ. Хăшĕнпе усă курни маркировкăран паллă", – вĕрентет республикăри гигиенăпа эпидемиологи центрĕн пай пуçлăхĕ Гафур Хаялутдинов.**

**PP маркировка е виçкĕтеслĕхри 5 цифра ку япалана полипропиленран тунине кăтартать. Унпа пластик стакан кăлараççĕ. Вăл вĕрекен шыва чăтăмлă. Анчах та çав савăтпа хăватлă эрех ĕçме юрамасть. Тĕрлĕ йышши çу ярсан та стакан тытăмĕ арканма пуçлĕ.**

**PS маркировкăллă тата 6 цифрăллă япала – полистиролтан. Ăна сивĕ апат-çимĕç валли кăлараççĕ. Апла тăк ку стакана вĕри чей е кофе ямалла мар.**

**EPS паллă кăпăклантарнă полистиролпа усă курнине çирĕплетет. Вăл алла пĕçертмест. Ку савăтпа микрохумлă кăмакара апат ăшăтма пулать. Çак материала шыв та, çу та, йӳçек те, спирт та сиенлеймĕ.**

**Вăрах упранакан поливинилхлоридран тунă савăт сиенлĕ япаласем уйăрма пуçлать. Ăна 3 паллăллă виçкĕтеслĕх тăрăх пĕлме пулать. Çав вăхăтрах маркировкăсăр савăт-сапа та сутлăхра пуррине асра тытмалла. Ун йышшине специалистсем туянма сĕнмеççĕ.**

**Гафур Хаялутдинов каланă тăрăх, çусан е хытăрах сăтăрсан пĕр хут усă курмалли савăт-сапан çиелти сийĕ сиенленет. Çавна май сывлăхшăн сиенлĕ япаласем – кадми, тăхлан, формальдегидсем – çиеле тухаççĕ. Унсăр пуçне сывлăш та, çутă пайăрки те, ăшă та пластик пахалăхне усал витĕм кӳнине палăртса хăварас килет.**

**Ĕне тытакан кил хуçи арăмĕсем пĕр хут усă курнă пластик кĕленчене сĕт тултарса сутнине тăтăш курма пулать. "Çав кĕленчесен ытларах пайне сутуçăсем çӳп-çап вырăнĕнчен е çĕр çинчен пуçтараççĕ. Вĕсене лайăх тасатни иккĕленӳллĕ. Çын хыççăн тытнă япалана пула хырăмлăх чирĕсем аталанмаççĕ", – асăрхаттарать гигиенăпа эпидемиологи центрĕн пай пуçлăхĕ Анатолий Дьячков. Ку çеç те мар – çав сĕте лабораторi тĕрĕслевĕ витĕр кăларманнине те шута илмелле. Ку тĕслĕхре ĕни те, хуçи хăй те чирлĕ маррине никам та çирĕплетеймест.**

**Пластик савăт-сапана пирĕн тăрăха Раççей тĕрлĕ регионĕнчен илсе килеççĕ. Гигиенăпа эпидемиологи центрĕн специалисчĕсем юлашки вăхăтра çав хатĕрĕн 20 тĕслĕхне тĕрĕсленĕ. Вĕри, сивĕ шыв та, 40 градуслă эрех те ярса пăхнă. Вĕсем пурте гигиена нормине пăхăннине палăртнă.**

**Тавар туянаканăн суту-илӳ вырăнĕнче пахалăх сертификатне ыйтма ирĕк пурри çинчен манмалла мар. Хамăр сывлăхшăн, чи малтанах, хамăрах яваплă.**

# Мирлĕ пурнăçшăн пуç хунисен

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе кăçал 70 çул çитрĕ. Ăна хальхинче те ытти чухнехи пекех чаплăн та чыслăн паллă турăмăр. Кăçалхи уява ытти çулхинчен уйăрас килмест, майăн 9-мĕшне яланах чунран кĕтсе мăнаçлăн уявлатпăр. Çапах кăçал мероприятисем анлăрах, чылайрах пулчĕç. Ветерансен йышĕ çулран-çул чакса, хаяр вăрçă ахрăмĕ инçерех те инçерех илтĕнет пулин те пĕр паттăр ячĕ те манăçмасть. Эпир, патриотла туйăмпа çитĕнекенскерсем, вĕсене асра тытатпăр. Мăн асаттесемпе асаннесен, кукамайпа кукаçисен терт-нушине курман пулин те каласа кăтартнине чун витĕр кăларатпăр. Пирĕн мирлĕ пурнăçшăн пуç хунисен умĕнче пуçăмăрсене таятпăр.**












Раççейре Çĕнтерÿ кунне паллă туман пĕр хула çеç мар, пĕр ял та, пĕр çемье те çук пулĕ. Çавăнпах мероприятисем те йышлă та сумлă иртеççĕ. Чăваш Ен те Аслă Çĕнтерĕве темиçе кун малтан уявлама пикенчĕ.

Эрнекун хула ертÿлĕхĕ, депутатсем, общество организацийĕсен хастарĕсем, шкул ачисем Б.Хмельницкий урамĕнчи тăванла масара пуçтарăнса госпитальсенче йывăр сурансене пула вилнисене асăнса чечексем хучĕç.

Çав кунах каçхине "Тигр" çар машинипе тĕп хуламăрăн урамĕсем тăрăх Мухтав монументчĕ умĕнчи Астăвăм çулăмĕнчен чĕртнĕ факел илсе çÿрерĕç. Анне палăкĕ умĕнче вырнаçтарнă ятарлă савăта чĕртрĕç унпа. Кăçал çĕршывра Астăвăм çулăмĕн эстафети иртрĕ, унта Раççейĕн 27 регионĕ хутшăнчĕ, çав шутра – Чăваш Ен те. Каçхи 9 сехетре палăк умĕнче аслă Çĕнтерÿ ячĕпе митинг-концерт йĕркелерĕç.

Çĕнтерÿ кунĕнчи мероприятисем те ирех пуçланчĕç. Малтанах ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев вăрçă ветеранĕсемпе, тыл ĕçченĕсемпе, общество тĕрлĕ организацийĕсен ертÿçисемпе, политиксемпе Шупашкарти сÿнми ялкăшакан çулăм умне чечек хучĕ. Пуçне хунисене асăнса шăп тăнă хыççăн Çветтуй Иоанн часавайĕнче кĕлĕ вуларĕç. Вăл вĕçленсен Михаил Игнатьев Шупашкар-Чăваш Епархийĕн ертÿçине Варнава владыкăна, халĕ пурăнакан владыкăсенчен пĕртен-пĕр тыл ĕçченне, Вырăс православи чиркĕвĕн çветтуй Дмитрий Донской кнеçĕн II степень орденне парса чысларĕ. Михаил Васильевич Афганистан, Çурçĕр Кавказ çĕрĕсенчи хирĕç-тăрусенчен таврăнайман ентешĕмĕрсене те чысларĕ. "Çĕнтерÿ" мемориал комплексĕнче вĕсен ячĕпе лартнă палăкĕсен умне чечексем хучĕ.

12 сехетре Хĕрлĕ тÿремре саванăçлă митинг пуçланчĕ. Малтанах Чăваш Ен Пуçлăхĕ пурне те Аслă Çĕнтерÿ 70 çул тултарнă ятпа саламларĕ, ветерансемпе тыл ĕçченĕсене пире тăнăç пурнăç парнеленĕшĕн тав турĕ.

Çĕнтерÿ кунĕн тĕп шăнăрĕ – парад. Чылайăшĕ çак кун кÿлмек хĕрне шăпах ăна курассишĕн килет-çке. Салтаксене, çар техникине сăнама ватти те, вĕтти те хавас. Хĕрлĕ тÿреме килнисене ялан хиллех тыткăнларĕ вăл, парад кашнин кăмăлнех тивĕçтерчĕ-тĕр. ЧР Çар комиссарĕ Александр Мокрушин "Равняйсь! Смирно!" команда парсан ятарласа вырнаçтарнă пукансем çинчен ветерансем те ура çине тăчĕç. Вĕрсе каламалли оркестр кĕвĕ каланă май Шупашкар çар гарнизонĕн пĕрлештернĕ полкĕн колоннисем ушкăнăн-ушкăнăн утса иртрĕç. Вăй ведомствин представителĕсем, Афганистан ветеранĕсем, Çурçĕр Кавказри юнлă хирĕç-тăрусене хутшăннисем, кадет шкулĕн, ачасен полици академийĕн, çар-спорт клубĕсен воспитанникĕсем, параппанçăсем... пĕр-пĕрне черетлерĕç. Вĕсем хыççăн вăрçă вăхăтĕнчи тата хальхи çар техникине курма май пулчĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин легендине – Т-34 танка, вăл вăхăтри чи лайăх çар машинине сăнама пултарчĕç. ЗИС-5 автомобиль те, "Катюша" пек паллă БМ-13 ракета комплексĕ те пулчĕç парадра. Вĕсем çĕр çийĕн иртнĕ май тÿпере парашютистсем ялавсем вĕлкĕштерчĕç.



ЧР ПА сайтĕнчи сăнÿкерчĕксем.

Парада вĕçлекенсем – "Вилĕмсĕр полк" акцие хутшăннисем. Ку уявăн тепĕр сумлă та пĕлтерешлĕ саманчĕ пулчĕ. Фронтран таврăнайман, суранланса килнĕрен нумай пурăнайман, мирлĕ пурнăçра вилнисен, хыпарсăр çухалнă салтаксен сăнÿкерчĕкĕсене йăтса утакан тăванĕсен колоннин вĕçĕ-хĕрри те çук тейĕн... Фронтовиксен сăнÿкерчĕкĕсене йăтса çак кун Шупашкарта кăна 8 пин ытла çын утрĕ. Пĕтĕм Раççейĕпе иртекен акци тĕп хуламăрта пĕрремĕш хутчен парадпа иртрĕ.

Хĕрлĕ лапамра Çĕнтерĕве халалланă уяври йăлапа килĕшÿллĕн кăмăл тунисен тушенкăпа пĕçернĕ хуратул пăттипе сăйланма май пулчĕ. Кун тăршшĕпех кунта пысăкран та пысăк, пĕлтерĕшлĕ уява халалласа юрăсемпе сăвăсем янăрарĕç.

Каçхи тÿпене вара Çĕнтерÿ салючĕ çутатрĕ. Тĕрлĕ тĕс вĕлкĕштерекенскер шартлатса çурăлнă май хăшне-пĕрне иртнине аса илтерсе çÿçентерчĕ-тĕр...

* * *

Çу уйăхĕн 6-9-мĕшĕсенче республикăра массăллă 465 мероприяти иртнĕ. Вĕсене 202 пин çын ытла хутшăннă. Парад пăхма кăна 78 пин çын кăмăл тунă. Ытти хулапа районта та Çĕнтерĕве анлăн паллă тунă. Çĕнĕ Шупашкарти уяв митингне ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăннă.

Çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче Комсомольски районĕнчи Асанкасси ялĕнче те Çĕнтерĕве чыслăн паллă тунă. Тĕрлĕ шайри ертÿçĕсем те сахал мар пуçтарăннă унта. Ял-йыш вăрçă хирĕнчен тăван тăрăха



# умĕнче пуçăмăрсене таятпăр



таврăнма пӳрмен, çаврăнса çитнĕ хыççăн пурнăçран уйрăлнисене сума суса палăк лартма шухăш тытнă. Паянхи мирлĕ пурнăçшăн кĕрешсе пуç хунисен йышĕнче Асанкасси паттăрĕсен ячĕсем те сахал мар. Орден-медаль кавалерĕсен йышĕнче Совет Союзĕн Геройĕ Федор Чернов та пур. Фронтовиксен ячĕсене çитес ăрусен асĕнче хăварас тĕллевпе Асанкассисем палăк çĕкленĕ. Ăна Расул Гамзатовăн "Тăрнасем" сăввин шухăшне тĕпе хурса калăпланă. Постамент çинче 406 паттăр ячĕ çырăннă.

Çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче Канаш районĕнчи Матьшӳре те вăрçăран таврăнайман ентешĕсене сума суса палăк уçнă. Мăнаçлă хура чул çинче – юнлă хирсенчен таврăнайман 140 салтак ячĕ. Вĕсемпе юнашар тăван тăрăха таврăнма пӳрнĕ ветерансен ячĕсем те вырăн тупнă, анчах вĕсен йышĕ чылай сахалрах.

Патăрьел районĕнчи Ульяновка – пĕчĕк те "вăрттăн" ял. Вĕсем те Çĕнтерӳ кунне кăçал хайсен палăкĕ умĕнче кĕтсе илнĕ. Патăрьел районĕнче кăçал Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарнине уявлама хатĕрленнĕ май 44 палăкпа обелиска юсанă-çĕнетнĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи Чăрăш Туçара 20-мĕш авиаполкăн инструктор-лейтенанчĕн Михаил Ермаковăн вилтăпри çинчи çăлтăрлă салтак пирамидине çĕнетнĕ. Михайловкăра та мемориал хăмине уçнă.

Куславккара çарпа ĕç геройĕсен аллейине уçнă. Расçей тата Чăваш Ен историйĕнче тарăн йĕр хăварнă 15 çын ячĕ вырăн тупнă унта.

Паттăр ентешĕмĕрсене, пирĕн мирлĕ пурнăçшăн хайсен пуçне хунисене асăнса Çĕнтерӳ кунне уявланă май ытти районялта та чылай асăну хăми, палăкĕ уçăлнă.

Элĕк районĕнчи Куракассинче пурăнакансем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисен ячĕсене çырнă çĕнĕ стела вырнаçтарнă. 81 салтак ячĕ вырăн тупнă унта. Стела йĕри-тавра – чечек клумбисем. Иртнĕ кĕркунне кунта 70 тĕп тюльпан лартса хăварнă. Юнашарах – улмуççи аллейи.

Йĕпреçре уява анлăн паллă тунă. Пĕрремĕш вăтам шкул умĕнче ун чухлĕ çын пухăнни не ас тумаççĕ те вĕсем. Паян пурăнакан 32 вăрçă ветеранĕнчен, шел, митинга саккăрăшĕ кăна çитнĕ. Ытти çĕрти пекех кунта та çак кун вилнисене асăнса палăксен умне чечексем хунă.

Тăвай районĕнче вăрçă саманчĕсене, тылри ĕçсене театрализациленине, пултарулăх ушкăнĕсен, шкул ачисен концертне курса савăннă халăх. Тăрмăш-Тăвай маршрутпа çуран чупакансен 1985 çултанпа пыракан ăмăртăвĕ те ăнăçлă иртнĕ.

Çĕнтерӳ кунне савăнăçпа уявланă май пысăк шанăçпа та пурăнатпăр: текех ан пултăрччĕ вăрçă!

**Татьяна НАУМОВА.**



### ПĔТĔМЛЕТӲ

**УЯВ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 70 çул çитнине паллă туса Чăваш Енре çу уйăхĕн 1-10-мĕшĕсенче 1,5 пин уяв мероприятийĕ йĕркеленĕ, вĕсене 500 пин ытла çын хутшăннă. Пысăк уява хатĕрленнĕ май мĕнпур 1167 асăну вырăнĕнче юсавпа тирпейлӳ ĕçĕсем иртнĕ.**

**Çĕнтерӳ кунĕнче кăна пирĕн республикăра культура 285 мероприятийĕ иртнĕ. Вĕсене 172 пин ентешĕмĕрпе хăна хутшăнма кăмăл тунă. Шупашкарти парада курма 38 пин çын тухнă, вĕсенчен 500-шĕ – вăрçă ветеранĕсемпе арăмĕсем.**

**"Вилĕмсĕр полк" акци ретне тĕп хулара çеç 8 пине яхăн çын тăнă.**

**Каçхи тӳпене çутатса салют çурăлнине 40 пин çын сăнанă.**

**Çĕнĕ Шупашкарти парад 10 пин куракана пуçтарнă. Вилнĕ тăванĕсен сăн ӳкерчĕкĕсене химиксен хулинче 1200 çын йăтса утнă.**

**ЙĔРКЕЛĔХ. Уяв кунĕсенче 300 ытла преступление те шута илнĕ. Массăллă мероприятисем иртнĕ вырăнсенчен йĕркене пăснăшăн шалти ĕçсен пайĕсене 7 çынна çитернĕ. Патшалăх автоинспекторĕсем вара 226 административлă протокол çырнă, çиччĕшĕ руль умне ӳсĕрле ларнипе çыхăннă.**

**СЫВЛĂХ СЫХЛАВĔ. Уяв кунĕсенче васкавлă пулăшу илме 15 çын пынă. Çу уйăхĕн 8-11-мĕшĕсенче медицина пулăшăвĕ кирлине 62 ветеран пĕлтернĕ, 20-шне госпитализациленĕ.**

**Мускавра иртнĕ Çĕнтерӳ парадне чăваш ветеранĕсенчен 89 çулти Иван Торин хутшăннă. Çулне кура мар патвар арçын çу уйăхĕн 11-мĕшĕнче тăван ялне ырăсывă, тĕрĕс-тĕкел таврăннă.**

**ĂНЛАНТАРНИ. Хăш-пĕр ветерана пĕр ятлă, пĕр пек темиçе медальпе чыслани палăрнă. Медальсем вара пачах расна пĕлтерĕшлĕ. Пĕри – патшалăх награди, Владимир Путин указĕпе килĕшӳллĕн тивĕçнĕ. Çавăн пекех юбилей медалĕсемпе общество тĕрлĕ организацийĕ /çав шутрах – ветерансен те/ те чысланă. Икĕ тĕрлĕ медаль пĕр-пĕринчен нимĕнпе те уйрăлса тăмаççĕ-мĕн.**

















## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### "Уçланкăри кăмпа" салат



**300 грамм кăлпасси, 3 çĕрулми, 3 кишĕр, 5 çăмарта, 2 панулми, шăратнă 1 сыр, 1/2 чей кашăкĕ лимон сĕткенĕ, 150 миллилитр хăйма, петрушка, тăвар кирлĕ.**

Кишĕре, çĕрулмие, çăмартана пĕçермелле. Сыра, панулмие, кишĕре, çĕрулмие, çăмартана /саррипе шуррине уйрăммăн/ теркăламалла. Панулмие лимон сĕткенĕпе сирпĕтмелле. Кăлпассие пĕрчĕлесе турамалла. Çимĕçсене сийлесе /çĕрулми – кăлпасси – сыр – çăмарта сарри – кишĕрĕн çур пайĕ – панулми/ кăмпа майлă хумалла. Çиелтен кишĕрпе тата çăмарта шуррипе витмелле. Салат йĕри-тавра вĕтетнĕ петрушка сапмалла.

### Какай кексĕ

**1 килограмм какай фаршĕ, пуçлă 1 сухан, 4 шăл ыхра, 1 çăмарта, тăвар, пăрăç, техĕмлĕх, тип çу кирлĕ.**

Суханпа ыхрана вĕттĕн турамалла. Фарша çăмартапа, пăрăçпа, тăварпа, техĕмлĕхпе, суханпа, ыхрапа пăтратмалла. Хутăша çăратма çăнăх хушмалла. Ăна ятарлă формăсене тултармалла. Какай кексне духовкăра 40-45 минут пĕçермелле.

### Брынзăпа симĕс сухан рулечĕ

**300 грамм пăру какайĕ, хытнă 1 батон, пуçлă 1 сухан, 1/4 стакан сĕт, 2 шăл ыхра, 1 апат кашăкĕ сар пăрăç, 1 çăмарта, тăвар, пăрăç, 50 грамм сыр кирлĕ.**

**Ăшне хума 100 грамм брынза, 2 çăмарта, 1 кишĕр, симĕс сухан хатĕрлемелле.**

Пĕçернĕ кишĕрпе çăмартана тата брынзăна тăваткалласа турамалла. Сыра теркăламалла. Симĕс сухана вĕттĕн касмалла. Ăшне хумалли çимĕçсене пăтратмалла, тăвар хушмалла.

Кишĕре аш арманĕ витĕр кăлармалла. Батона 5 минутлăха сĕте ямалла, пăрмалла. Суханпа ыхрана вĕттĕн турамалла. Какай фаршне батонпа, суханпа, ыхрапа, çăмартапа, сар пăрăçпа, тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла. Хутăша апат-çимĕç çатăрки çине хумалла, ăшне хумалли çимĕçсемпе витмелле. Рулет майлă çавăрмалла. Çиелтен сыр сапмалла. Брынзăпа симĕс сухан рулетне духовкăра 45 минут пĕçермелле.

### Вĕри бутерброд

**1 батон, 250 грамм кăлпасси, 250 грамм сыр, пĕçернĕ 3-4 çăмарта, майонез кирлĕ.**

Батона 1 сантиметр хулăнăш касмалла.

Çăмартана, кăлпассие тăваткалласа турамалла. Сыра теркăламалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла. Çак хутăша батон çине хумалла. Бутерброда ылтăн тĕс çапиччен духовкăра пĕçермелле.

### Персик торчĕ

**4 çăмарта, 200 грамм сахăр, чĕптĕм апат соди, 1 стакан çăнăх, 1 банка консервланă персик, 20 грамм желатин, 100 миллилитр йогурт, тип çу кирлĕ.**

Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла, çăнăх, апат соди хушмалла. Чустана духовăна лартмалла. Хатĕр бисквита тăрăхла касса 2 пая уйăрмалла.

Желатина 1 стакан вĕри шыва ямалла, вăйсăр çулăм çинче вĕреме кĕртмелле, консервланă персик сиропĕ ямалла.

Персиксене турамалла. Пашалусене йогурт сĕрмелле, иккĕшĕн хушшине персик хумалла. Çиелтен персикпа илемлетмелле, желе хутăшĕпе витмелле. Торта 2-3 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

### "Хĕвел" ирхи апат

**1 çăмарта, 1 татăк шурă çăкăр, услам çу, сĕт, тăвар кирлĕ.**

Варрине кăларнă çăкăр татăкне сĕтпе йĕпетмелле. Ăна икĕ енчен услам çупа ăшаламалла. Варрине çăмарта ямалла, тăвар сапмалла.

### Сĕлĕ печенийĕ

**200 грамм услам çу, 2 апат кашăкĕ пыл, 2 чей кашăкĕ апат соди, 50 грамм çăнăх, 35 грамм сĕлĕ хăрпăкĕ, 200 грамм сахăр, 150 грамм кокос хăрпăкĕ, 4 апат кашăкĕ вĕри шыв кирлĕ.**

Çăнăха сахăрпа, кокос тата сĕлĕ хăрпăкĕпе пăтратмалла. Ирĕлтернĕ услам çăва пылпа хутăштармалла, вĕри шывпа пăтратнă апат соди ямалла, типĕ хутăш хушмалла. Чустана йĕтĕрлемелле, çаврашкасем касса кăлармалла. Печение 15-20 минутлăха духовкăна лартмалла.

## СЫВЛĂХ

### Иммунитета çирĕплетме

Импĕрпе панулми чейĕ организма тасатма тата иммунитета çирĕплетме пулăшĕ.

Теркăланă 30 грамм импĕр тымарне эмаль савăта ямалла, 2,5 литр шыв хушмалла. Вĕреме кĕрсен вĕтетнĕ 2 панулми ямалла, 3-5 минутран çулăма сӳнтермелле. 10 минутран çур лимон сĕткенĕпе, 100 грамм сахăрпа пăтратмалла. Чейе пылпа та пылаклатма юрать.

### Юн тымарĕсене тасатма

Аш арманĕ витĕр кăларнă 2 лимона 2 апат кашăкĕ пылпа пăтратмалла. Çак хутăша кантăк савăтра упрамалла. Ăна куллен апатчен 2-3 чей кашăкĕ çимелле.

1-ер чей кашăкĕ лимон сĕткенне, пыла, услам çăва пăтратмалла. Çак хутăша выçă варла ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 10 кун.

## ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Ĕне çилли таса пулмалла

Ĕне сĕт лайăх антартăр тесен çилли те таса та сывлăхлă пулмалла. Сăвас умĕн çуса тасатнă, типĕтнĕ çилле массаж туни аван. Ку юна хăвăртрах чупма, сĕте лайăх антарма пулăшать. Тĕппипех суса илни те çилле чире каясран сыхлать.

Массаж тунă хыççăн сума та юрать. Куллен пĕр вăхăтра тухма тăрăшмалла. Сунă хыççăн та çилле ачашламалла, тепĕр хутчен массаж тумалла. Уйрăмах хытă чĕчĕллĕ ĕнесене пырса тивет ку. Вĕсен çиллине сунă чухне те хăвăрт кăна массаж тума пулать. Ĕçе вĕçлесен çилле шăлса типĕтмелле, чĕччисене вазелинпа е çу таврашĕпе сĕрмелле. Вĕсем кушăрхама, çуркаланма тытăнсан ветеринарсенчен канаш ыйтмалла.

Ĕне чĕччине çемçетмелли маçе килте те хатĕрлеме пулать. Ку тĕллевпе 1 стакан тип çăва 30 грамм парафинпа е пыл хурчĕн ăвăсĕпе хутăштармалла. Тип çăва шыв мунчинче вĕрилентермелле те парафин хушса ирĕлтермелле.

Ĕне чĕччи тĕрĕс мар пăхнипе те çуркаланать. Сунă чухне ăна тĕрлĕ маçпе е сĕтпе йĕпетме юрамасть. Анчах та сăвиччен те, сусан та ăшă шывпа çуса типĕтмелле, вазелин сĕрмелле. Сунă хыççăн сурансене йод сĕрсен аван.

Ĕне çиллин чи анлă сарăлнă чирĕ – мастит. Профилактика тĕлĕшĕпе мĕн тумалла-ха? Халăхра чи анлă сарăлнă мел – укроп шывĕ. 1 витре вĕри шыва 15-20 кашăк укроп вăрри ямалла та 3-4 сехет лартмалла. Вăрăллă укроп туни те юрать. Кун пек чухне 1 витре вĕри шыва 0,5-1 килограмм çимĕç ямалла. Пăруланă хыççăн кун пек шыва ĕнене 2-3 кун талăкра пĕр-икĕ витре ĕçтермелле. Маститпа тăтăшах чирлекен выльăха 10 кун шăвармалла. Пĕрер уйăхран сиплеве тепре ирттерме те юрать. Укроп шывĕ сĕт хăвалать, çавăнпах кун пек чухне ĕне çиллине уйрăмах лайăх пăхмалла. Массаж тумалла мар. Иккĕ мар, тăтăшрах сусан та юрать.

Тепĕр чухне çилĕ пăруланă хыççăн шыçать. Кун пек чухне çилле 1 апат кашăкĕ пыл тата 100 грамм çутă эрех хутăшĕпе сăтăрмалла, ăшă татăкпа çыхмалла. Вăл ан салтăнтăр тесен ăна çурăм шăмми тавра явса илмелле.

Хушăран çилĕ пăрулас умĕн те шыçать. Кун пек чухне хăвăр шухăшланă тăрăх тата 10-12 кунтан пăруламалли вăхăтра сĕте пĕрре суса тăксан та пăсмасть – çилĕ çемçелĕ çеç. Тĕппипе сумасан та юрать.

Ĕне çиллине çума тытăнсан тăпăртатать тăк ăна малтан хӳри шăмминчен пуçласа пуçĕ таран çăма вирелле ачашласан, ĕнсине хыççан аван. Кайри урисен шалти пайне /çилли патĕнче/ ачашлани те лăплантарать ĕнене. Чĕччине вĕри шывпа /50-55 градус/ çуни вара сĕтри çу хисепне ӳстерет.

Ĕне çилли шĕпĕнпе те витĕнет. Ку ĕне чĕччине çурăксем витĕр вирус çакланнине пĕлтерет. Вĕсене сиплемесен те юрать. Ĕне çиллине тĕрĕс çуса-тасатса тăрсан вăхăт иртнĕ май вĕсем хăйсемех çухалаççĕ.

Çак тĕллевпех улма хуппипе те усă курма юрать. Шăтнă, калчаллă улма шывĕн чĕччисене шĕпĕн пĕтиччен сăвăнни-сăвăнманнине пăхмасăр сĕрмелле. Хăшĕ-пĕри çилле сиплеме солидолпа усă кураççĕ. Кун пек чухне ăна сăвас умĕн ăшă шывпа уйрăмах лайăх çумалла.

# Тухăçа ӳстерме

**Çĕрулми** хушшине пăрçа йышши культура акмалла. Çак ӳсен-тăранăн тымарĕнчи бактерисен каяшĕ çĕрулмишĕн азот им-çамĕ пекех.

**Кăшман** тухăçĕ пысăкрах пултăр тесен йăран айне 3-4 сантиметр хулăнăш типĕ çулçă сармалла. Вăл тăпрана йӳçĕхтерĕ, çавна май им-çам сапмалла пулмĕ.

**Улма-çырла** йывăç вуллине извеç хутăшĕпе сирпĕтсен хурт-кăпшанкă тапăнмĕ. Извеçе сивĕ шывпа пăтратмалла. Ĕç хыççăн алла супăньпе çумалла.

Йĕпе хурт **купăстана** ан çитĕр тесен йăран хушшине сăра савăчĕ лартмалла. Сăтăрçăсем çав шĕвек еннелле туртăнĕç, кайран купăста пирки аса та илмĕç.

**Купăста** йăранне тăтăшрах кăпкалатмалла. Çавна май ӳсен-тăранăн хушма тымарсем тухаççĕ. Вăл нӳрĕк ытларах туртма пуçлать.

**Хăяра** куллен ирхине тата каçхине пуçтармалла. Çакă пысăкрах тухăç илме пулăшĕ.

**Кавăн** аврине хăвăра кирлĕ еннелле пăрмалла та хăш-пĕр вырăна çĕрпе хупламалла. Çакăнта хушма тымар аталанĕ те ытларах çимĕç тытăнĕ. Авăра урăх çĕре куçарма юрамасть.

# Хутăш йăран

**Пахчаçимĕç лаптăкĕпе тухăçлăрах усă курас тĕллевпе пĕр йăран çинех темиçе тĕрлĕ культура акма-лартма пулать. Пĕчĕк пахчашăн уйрăмах аван ку.**

Сăмахран, малтан пĕр йăран çинче ир пулакан çимĕç акса илме, унтан кайран пулаканнине лартма пулать. Е пĕр вăхăтрах тымарпа ешĕл çимĕç ӳстерме май пур.

**Салатпа редис** купăста хушшинче ним мар ӳсет. Çав вăхăтрах ир тата кайран пулакан купăстана та пĕрпĕринпе черетлесе йăвăрах лартма пулать. Малтанхине касса илсен кайран пулаканни саркаланса çеç ларĕ.

**Сухан** кишĕр е çарăк йăранĕ хушшинче те лайăх ӳсет. Ешĕл çимĕçĕшĕн ӳстерекенни кăшман хушшинче те аван ларать.

**Куккуруса** ытларах чухне явăнса ӳсекен шалча пăрçи, пăрçа хушшине лартаççĕ. Çӳллĕ ӳсекенскерне помидор е хăяр йăранĕ çине лартсан та юрать. Купăста хушшинче те аптăрамасть.

**Помидор калчине** çĕр çине куçариччен вăл йăран çинче салат, редис, ытти ешĕл çимĕç ӳстерме пулать. Малтан пушаннă йăрансем те тепĕр хутчен хăвăрт пулакан çимĕç пама ĕлкĕреççех.

Çимĕçсене йăвă е темиçе хутчен ӳстерни пахча тухăçлăхне ӳстерме май парать çеç.

## ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ



ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

# Суя пурнăç – пурнăç мар, саккунсăр арăм – арăм мар

Арçынпа пурăнма тытăнни çулталăк çитрĕ ĕнтĕ. Апла пулин те хама качча кайнă теейместĕп-ха, мĕншĕн тесен Алюшпа çырăнман эпир. Туй та кĕрлеттермен. Тепĕр тесен, капла та аван пурăнатпăр.

Алюшпа епле паллашнине каласа хăварни те вырăнлă-тăр. Хаçата пĕлтерÿ панăччĕ вăл. Шăнкăравларăм. Ун чухне вăтăра çывхараттăм пулин те аттепе анне килĕнче пурăнаттăм. Шупашкарта техникум пĕтерсен хулара хваттер тара илсе пурăнма ытла тăкаклă пулнăран, пушшех те – тивĕçтерекен ĕç те тÿрех тупаймарăм, тăван киле таврăнтăм. Хамăр тăрăхрах тăрăшма пикентĕм. Куллен ĕçе çÿрерĕм, таврăннă тĕле аннен вĕри апачĕ те пиçетчĕ. Çапла çул хыççăн çул сисĕнмесĕрех иртрĕ.

Аттепе анне пĕрмай пурнăçа вĕрентни тарăхтаратчĕ хушăран. Мăшăрланмаллине те пĕрмай калакан пулчĕç. Ялта вара пĕр ырă каччă та çук. Авланманнисем е ĕçсĕр çапкаланса çÿреççĕ, е эрех пичкине кăмăллаççĕ. Хулара вĕреннĕ чухне йĕкĕтсемпе калаçман мар-ха, анчах пĕри те качча илмерĕ.

Çапла хаçатра пĕлтерÿ курсан аптăранă енне шăнкăравларăм. Алюш сăпайлă калаçрĕ. Пурнăç çынни иккенни те палăратчĕ сăмахланă май. Пĕр усал сăмах та илтмен унран, çавăнпах киревсĕр йăласемпе çыхланманнине те ĕнентĕм. Каçсерен куллен шăнкăравларĕ савни. Çапла пĕр хушă телефонпа калаçнă хыççăн курнăçас терĕмĕр. Тĕлпулăва чечек çыххипе килчĕ вăл. Кун пек парнене нихăçан тивĕçменччĕ эпĕ – питĕ савăнтăм. Пĕчĕкрех пулин те тиркемерĕм Алюша. Ара, хам та ял хĕрĕ пулса кайнă-çке. Ытисем мана тиркĕç, вара пачах пĕччен юлмалла-им?

Çапла паллашни виçĕ уйăх иртсен пурăнма Алюш патне куçрăм. Пĕрпĕрне килĕштертĕмĕр темелле. Ĕçчен те ырă кăмăллă упăшкам хĕрĕхе çывхарса та мĕншĕн авланманнинчен тĕлĕнеттĕм хушăран. Хăй вара çакна хĕрсемпе калаçма вăтаннипе çыхăнтарчĕ.

Пурнăç йĕркеленчĕ пек. Хунямапа та килĕштеретпĕр. Алюш килçуртне эпĕ пыриччченех çĕнетме тытăннăччĕ. Кайран та стройка ĕçне малалла тăсрăмăр. Упăшка Мускава шапаша çÿрерĕ. Эпĕ ялти фермăра ĕне сума тытăнтăм. Çапла, ĕçĕ чапли мар. Анчах эпĕ те аслă пĕлÿ илмен-çке. Тепĕр тесен пирĕн колхоз лайăх аталанать. Укçине вăхăтра тÿлет. Шалу та пĕчĕк мар. Хулари тепĕр специалист та аллине пирĕн чухлĕ илеймест. Пĕтĕмпех ăнăçлă пек. Упăшкампа та савăнса пурăнмалла. Малтанах айванрах пек те туйăннăччĕ-ха. Çук, муттур вăл манăн. Ĕçчен. Укçа-тенке те ĕçсе тăкакламасть, пĕтĕмпех киле илсе килет. Хушăран парнесемпе те савăнтарать. Айккине чупать тесе шухăшлама та сăлтав паман.

Нумаях пулмасть вара çине-çине çĕнĕ хыпар пĕлтĕм те шалтах! тĕлĕнтĕм. Манăн шăп çÿрекен упăшкан айккинче икĕ ача çитĕнет иккен!

Малтанах çакна ĕненмерĕм-ха, шÿт пулĕ терĕм. Пĕр кунхине ĕçрен таврăннă май пĕрле ĕçлекен Марье сăмах пуçарчĕ кун пирки. Паллах, элек пулĕ терĕм.

Анчах пĕр кунхине хуняма карчăк кÿршĕ хĕрарăмĕпе калаçни хăлхана кĕчĕ те Марье суйманнине ăнлантăм.

– Настук кинĕн ачи халĕччен çиччĕ тултарчĕ пулĕ. Мĕнле пурăннине те пĕлместпĕр. Телефонне те тытмасть тетчĕ унччен Алюш. Халĕ, Лариса кин килнĕренпе, шăнкăравламан та пулĕ. Маша кинĕн виççĕ тултармалла. Хырăмлине пĕлтермесĕрех тухса кайнăскер пире мăнук парнелениине çынсенчен çеç илтрĕмĕр вĕт. Кахалрахчĕ çав, ĕçлеме юратмастчĕ. Ывăлăм çавăншăн пĕр-икĕ хутчен асăрхаттарчĕ те çилленсе тухса кайрĕ. Тем, пĕринпе те килĕштереймерĕç. Лариса кинпе çеç аван пурăнччăр ĕнтĕ, – тет хуняма кÿрше. Эпĕ ĕçрен таврăннине, алăк уçса кĕнине сисмерĕç те хĕрÿ калаçакан карчамасем.

– Тухса кайнă-кайнах, килсе кĕрсе пурнăçăра çеç ан çавăрттарччăр ĕнтĕ, – сăмах хушать Марук аппа та.

– Алюшĕн те кине ачисем пирки каласа кăтартмалла та. Тем шарламасть пулмалла. Суя пурнăç – пурнăç мар, тĕрĕспе кун кунламалла та... Ачаллине пĕлсен тухса каясран шикленет ахăр.

Ку калаçу чăннипех те шухăша ячĕ. Анчах хĕрсе кайнă вăхăтра хама лăпкăн тытма тăрăшрăм. Кăштах лăплантăм та алăка тепĕр хутчен хытăн уçса хупрăм. Хальхинче кинемейсем илтрĕç те мана ăшшăн кĕтсе хирĕç утрĕç. Вĕсемпе ним пулман пек апатланма çăмăл пулмарĕ.

Хуняма çывăрма выртсанах аллăма хутпа ручка тытрăм акă. Мĕн тумаллине те пĕлместĕп. Алюш хальлĕхе Мускавра-ха. Пĕр-икĕ эрнесĕр те таврăнмасть. Илтни пирки телефонпа те калаçас, те таврăниччен тăхтас? Кун пирки пачах сăмахламасан та майĕ çук. Шăп çÿреме юрамастех – ĕнсе çине хăпарччăр-им? Мĕншĕн ыйтса пĕлес мар? Çилленсе тухса каяссăм та килмест. Арçынсăр пурăнма çук-çке. Çуртне те халĕ пĕрлех çĕклетпĕр акă.

Упăшка таврăнсанах çырăнасси пирки çирĕп калаçма тытăнас пулĕ. Саккунсăр арăм – арăм мар. Çуртйĕрне туса пĕтерсен хăвалаласа кăлартăр-им? Сыхланас пулать. Пушшех те – чĕрем айĕнче çĕнĕ чун тĕвĕленнĕ пек туйăнать...

**ЛАРИСА.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

ЧУНРИ

# Çын çăварне хупаймăн

Пирĕн ĕçре никампа та ăшшăн калаçма юрамасть. Ыранах çав çын çумне хушса интереслĕ юрату романĕ шухăшласа кăлараççĕ. Вăрăм чĕлхеллисем кирек ăçта та пур çав. Ĕçтешĕм театра кайма тухнăччĕ, чарăнăва çитиччен пĕрле утрăмăр. Кайран пĕр троллейбусах ларса кайма лекрĕ. Ман çумра пĕр пин тенкĕлĕххи кăначчĕ те, кондуктор пысăк укçана ваклаймарĕ. «Юлташу тÿлемест-и?» – терĕ хайхискер. Валерий Николаевич çийĕнчех 15 тенкĕ кăларса тыттарчĕ. Хыçалта пĕрле ĕçлекенскер ларса пынă-мĕн, маншăн укçа тÿленине те курса юлнă. Эпĕ те куç хÿрипе асăрхарăм-ха юмах яма юратаканскере, анчах та вăл маларах анса юлчĕ. Тепĕр кунне ман çине чеен пăхкаласа илнинчех ĕçре часах ят тухасса сисрĕмха. Виçĕ кун иртрĕ-и, çук-и, учреждение тем те пĕр пăшăлтатма та тытăнчĕç. Ĕç хыççăн киле мар, айккинелле чупатăп-мĕн. Пурăна-киле хайхи Валерий Николаевич манăн эркĕн пулни çинчен те илтрĕм. Çакăн хыççăн вăл пирĕн пата кофе ĕçме кĕме те хăракан пулса çитрĕ.

Ĕнер тата коридорпа утса пыраттăм та: «Авланнă арçынпа мĕн тумалла? Мĕншĕн çулăхмалла?» – пĕри хытăн кăшкăрса мана тĕксе калаçнăнах туйăнчĕ. Нимĕн чĕнмесĕрех çаврăнса утрăм. Тепĕр тесен, калаçчăрах. Çын çăварĕ хапха мар, хупса хума çук. Пуш параппан çапакансем те кирлĕ. Вĕсемсĕр пурăнма та кичем пулĕччĕ.

Ĕçре пÿрне кăтартсан та ахăлтатса кулакан якăлти пĕр хĕрарăм пур. Кунĕпе вăл ихĕрнине кăна итлесе ларатпăр. Мана, тĕп бухгалтер тивĕçне пурнăçлаканскерне, пушшех те чăрмантарать. Пулаççĕ вĕт çавнашкаллисем. Никама та мар, çавна пуринчен ытла кăсăклантарать ман пурнăç. Çын çинчен сас-хура сарма юратаканĕ те вăлах. Мĕнех, ясар шухăшлăскер ыттисене те хăйĕнпе танлаштарать пуль çав.

Эх, пĕлесчĕ вĕсем эпĕ мĕнле ăшталаннине. Упăшка виçĕ çĕрте тар тăкнине кура хамăн ĕçрен тухсан ăна пулăшма вĕçтеретĕп. Асанне-кукамай юнашар мар та, ача садĕнчен хĕр пĕрчине илме те аран вăхăт тупатпăр. Ачамсене тасалăхра ÿстерес тесе кашни каçах урай çăватăп. Арçынăн вĕри яшка кирлĕ. Вăхăт çитменнипе ирхи тăвата сехетре тăрса пĕçерме пуçларăм. Ача садне çÿрекен пепкен тумтирĕ пĕрмаях таса пулмалла. Пĕрне шкула кăларса янă хыççăнах теприн кĕпи-йĕмне якатма пикенетĕп. Ют арçын валли пĕр çеккунт вăхăт çук манăн. Ăçта кунта урăххи пирки шухăшлама?

**ИРИНА.**

АХ, АНЧАХ

# Лайăххине ăçтан тупас?

Çамрăк чухне каччăсемпе çÿремен мар эпĕ. Хăшне-пĕрне хам тиркерĕмтĕр, теприсем манран ытла урăххине килĕштерчĕç ахăр – çавăнпах паянхи кун та качча кайман. Тепĕр тесен, Турри çырни хапха умне килсен халĕ те кая юлман-ха – вăтăртан кăшт çеç иртрĕм. Çемьеллĕ тантăшăмсем тахçанах ватă хĕр йышне кĕртрĕç ĕнтĕ. Аттепе анне те, аппапа шăллăм та кун пирки кашнинчех аса илтерме май тупаççĕ.

Мана вара хальлĕхе пĕччен те кичем мар. Ĕçрен мăр-мăрăм кĕтсе илет. Алăк сассине илтсенех хирĕç чупса пырать те ачашланма тытăнать. Унпа калаçакалаçа апат хатĕрлетĕп вара. Пĕтĕмпех ăнланнăн тимлĕн пăхать кушакăм. Тунсăх пуснă пек пулсан та аптăрамастăп. Аппам та, шăллăм та Шупашкартах пурăнаççĕ. Вĕсем мана хăнара курма яланах хавас. Ачисем те савăнса кĕтсе илеççĕ. Эх, вылятăп вара пĕр хушă шăпăрлансемпе. Вĕтĕр-шакăрпа хам та ачаплансах каятăп. Тепĕр чухне çуратмалла мар-ши текен шухăш та иленет пуçăмра. Анчах ку тĕллеве пурнăçлама арçын кирлĕ-çке. Пули-пулми мар, лайăххи тата! Чиперри, чи кирли – сывви, эрех-сăра таврашĕпе туслашманни эппин.

Арçын тенĕрен, вăл кил-хуçалăхра та пăсмĕччĕ. Пĕччен те аванах пурăнатăпха та, анчах хам пултарайман ĕçсене пурнăçлакан кирлĕ тепĕр чухне. Пăтине кăна çапăп-ха, лампочкине те улăштарăп. Алăк хăлăпне тÿрлетейместĕп вара. Татăлса анма тытăнни иккĕмĕш



уйăх çине кайрĕ ĕнтĕ. Кун пирки шăллăма та систертĕм. Май тупсан кĕрсе тухма шантарнăччĕ тăванăм. Каçченех ĕçлекенскер ерçеймерĕ-ха. Канмалли кунсенче мăшăрĕпе, ачисемпе пулас килнине те ăнланатăп.

Тĕнче хĕсĕр мар паллах. Арçын тени çук мар. Çумра явăнаканнисем те пур, анчах нихăшĕ те кăмăла пымасть. Пĕрин пĕрмай уяв – хаяррине сыпма сăлтав çеç шыраса çÿрет тейĕн. Кун пек упăшка пачах кирлĕ мар. Теприн хĕрсене çав тери юратать. Мана та ăшă сăмахсем кăмăлăма çавăрассишĕн çеç каланăн туйăнать. Тĕллевĕ те пĕрре – вырăн ăшăтасси. Тĕллевне пурнăçласанах юратми пулать ахăр. Çавăнпах ăна та пурнăç йĕркелемелли арсен йышне кĕртместĕп.

Çыпăçакансен йышĕнче Васса та пур-ха. Сăн-пичĕпе те, кăмăлĕпе те аптăрамасть пек. Хĕрĕхе çывхараканскер авланса уйрăлма та ĕлкĕрнĕ. Ялта ÿснĕ арçынпа килĕштереймен хула майри. Туяннă хваттерне мăшăрĕпе хĕрне хăварса Васса халĕ урăххине тара илсе пурăнать. Хăйне валли хула айккинче çурт хăпартас ĕмĕтпе хĕмленет. Çĕр лаптăкне туяннă ĕнтĕ. Ĕçлеме те ÿркенмест пек туйăнать. Çавăнпах пĕр-икĕ эрне каялла ăна чей ĕçме хăнана та чĕнтĕм. Ара, хăлăп тÿрлетмелле-çке.

Вăт сана, тĕнче! Ялта ÿснĕ Васса та ĕç майне-шывне пĕлмерĕ. Ун-кун пăхкаланинченех унра шанăç çуккине ăнлантăм. Çавăнпах мăлатука та каялла илтĕм. Кун хыççăн ăна хăнана татах чĕнесси пирки калаçу пулма та пултараймасть.

Качча каяс тесен те ырă арçын тупаймăн паян. Çавăнпах лайăххине шыраса кăнтăр çутинче хунарпа çÿресе вăй-халăма пĕтерессĕм те çук. Пÿрни пур тăк – тупăнĕ-ха. Халĕ вара кушакăмпа иксĕмĕре капла та пачах та кичем мар.

**МАРЬЯ.**
Шупашкар хули.

**2015: К.ИВАНОВ ÇУЛТАЛĂКĔ**

# Чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ

**Çу уйăхĕн 15 /27/ – мĕшĕнче чăваш сăвви-юррин ăсти К.В.Иванов çуралнăранпа 125 çул çитет.**




Пултаруллă сăвăçăмăра, вилĕмсĕр "Нарспи" поэма авторне халалласа Чăваш Енре тĕрлĕ мероприяти иртет. Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Таяпа тăрăхĕнчи культура ĕçченĕсем ялти вулавăшра "К.Иванов – чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ" ятпа пысăк курав йĕркеленĕ. Библиотекăра классикăмăрăн кĕнекисемпе, пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе, ун çинчен тĕрлĕ писатель хакласа, тишкерсе çырнă произведенисемпе паллашма пулать. Çавăн пекех вулавăшра çак ялта çуралса ÿснĕ хастар вулаканăн Вениамин Кудряшовăн "Вилĕмсĕр "Нарспи" поэмăри сăнарсем" ятлă ÿкерчĕксен куравне те йĕркеленĕ. Вăл ăста платник, ял çыннисем каланă тăрăх аллинче турпас татки те чĕрĕлет-мĕн. Ÿнерçĕ библиотекăпа чылайранпа туслă çыхăну тытать. Ылтăн алăллăскер киçтĕкпе ĕçлеме, сăрă суйлама маçтăр пулни унăн ÿкерчĕкĕсенче уççăнах палăрать. К.Иванов çулталăкĕ пулнине шута илсе никам хистемесĕрех алла хутпа кăранташ тытнă вăл. Петр Сизов художник ÿкерчĕкĕсене тĕпе хунă хăй ĕçĕсене.

Ака уйăхĕнче культура ĕçченĕсем библиотекăра "Слакпуç юрăçи" ятлă литература каçĕ ирттернĕ. Вулакансем К.Ивановăн тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕпе, унăн çăмăл мар кун-çулĕпе паллашнă. Шкул ачисем "Нарспи" поэма сыпăкĕсене пăхмасăр вуланă.

Кĕçĕн Таяпара чăн-чăн ал ăстисем пурăнаççĕ. Вулавăшра "Нарспи" поэмăри сăнарсене "чĕртсе тăратнă". Кунта Нарспипе Сетнер те, Михетер те, Тăхтаман та, кĕвентине утланнă пĕчĕк Сентти те пур. Нарспие ултă тĕрлĕ сăнланă. Хĕр чухнехинчен тытăнса Тăхтаман валли наркăмăш яшки пĕçерни таранах. Пуканесене чун кĕртекенĕсем – Кĕçĕн Таяпара пурăнакан Нина Михайлова, Анна Савинова, Маргарита Галкина тата Александра Козлова. Тăватташĕ те спортпа туслă, юрра-ташша ăста. Вĕсем ял тăрăхĕн библиотеки çумĕнчи "Салампи" кружока çÿреççĕ.

К.Иванов – чăваш халăхĕн мухтавĕ, çĕнĕ çырулла сăмахлăха пуçараканĕ, хура халăха çутталла туртаканĕ. Нумай енлĕ пулнă унăн пултарулăхĕ. Çыру ĕçĕнче тĕрлĕ енлĕ ăста – эпик, лирик, кулăшçă, фольклорçă, драматург, куçаруçă. Çав вăхăтрах вăл пултаруллă музыкант, художник, педагог, редактор. Çамрăклах ырă та пархатарлă ĕçĕсемпе тĕксĕм тĕнчене çутатса хăварнă. Этем ирĕклĕхне, ĕçне, телейне, тĕрĕслĕхне мухтанă.

К.Иванов пирĕн тăван культурăра яланах чĕрĕ, çамрăк. Вăл – чăваша сиплĕ вăй паракан çăлкуç. Унăн "Нарспийĕ" вилĕмсĕр. К.Иванов произведенийĕсене вуласан çĕнĕ ĕмĕтсем çуралаççĕ, поэт калашле, "Малалла! Малалла! ыткăнас килет!»

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнÿкерчĕкĕсем.




***Александр АРТЕМЬЕВ***

# Ан аван, шĕшкĕ!

**/Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте/.**

– Юрлар мар-и пĕрех хут сирĕн юрра? – терĕ те Казахстан йĕкĕчĕ, эпĕ мĕн каласса кĕтмесĕрех янăраттарса та ячĕ:

Она вон, шишка, она вон...

– Пирĕн Курман шăпчăк пекех, юрламасăр пурнаймасть. Ахальтен мар акынсен йăхĕнчен тухнă, – шÿтлесе илчĕ Ворончихин, вара хăй те юрра ячĕ.

Вырăспа казах хамăр юрра шăрантарнине итленĕ май пĕр самант тĕлĕнсе те саванса лартăм, унтан хам та чĕтаймарăм, юрласа ятăм:

Ан аван, шĕшкĕ, ан аван...

– Кам кунта чăвашла çав тери ăста юрлать?! – илтĕнчĕ хыçăмра. Эпĕ юрлама чарăнса каялла çаврăнса пăхрăм.

Вут умне вăтам пÿллĕ, тĕреклĕ хул-çурăмлă каччă пырса тăчĕ. Гварди сержанчĕ. Кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Çăлтăр пулать иккен çамрăк чух, мĕн тери хăватлă вăл, малтанхи юрату!..

* * *

– Астров! Эсир çыхăну батальонне каятăр! – хушаççĕ мана дивизи штабĕнче.

– Итлетĕп!

Батальонтан килнĕ связнойпа каçа хирĕçех çула тухрăмăр.

Фронтра шăпах, хушăран çеç таçта пулемет такăртатни раштаври сивĕ каç шăплăхне чĕтретет е тăшман ракетин сивлек çути янкăр тÿпере ялкăшса çухалать. Хĕвелтухăç Пруссие эпĕ паян çеç килсе çитрĕм. Нимĕç çĕрĕ кун çутинчех кичем пекчĕ, тĕттĕмре вăл тискеррĕн туйăнчĕ.

Çыхăну батальонĕ Пилькаллен хулинчен пĕр-икĕ çухрăмра, шурлăхлă пĕчĕк вăрман хĕрринче, вырнаçнă. Тарăн çырмара пытанса ларакан çĕрпÿртсен мăрйисенчен тĕтĕм майор сасартăках куç харшисене пĕрчĕ... – Тар шăршлаха курман эппин? Ку япăхрах вара... Пирĕн батальон пĕтĕм дивизийĕпе чаплă, Ленин орденлĕ батальон. Салтаксем кунта пурте маттурскерсем, старшина та – ылтăн; пурăнсан курăр-ха ак /майор чеен кулса илчĕ/... Япăх салтака хисеп çук пирĕн патра. Ну, телейлĕ служба сунатăп! Так, так... Кайма пултаратăр.

Тÿрех калас пулать, комбат мана савăнтармарĕ. Эпĕ фронтра пулманнишĕнех вăл манпа пĕчĕк ачапа калаçнă пек пупленни мăн кăмăллă чĕреме ыраттармалипех ыраттарчĕ.

Çапла, батальона çитнĕçитменех кăмăлсăрлантăм. Çапах та ку çеçки кăна пулчĕ-ха, çырли вара кайран пиçе пуçларĕ.

«Ылтăн» старшина ман çине иккĕмĕш каçах кăшкăрса тăкрĕ. Çĕрле тревога пулчĕ. Эпĕ, орденĕ. «Отличный связист» значок тата пилĕк-ултă медаль йăлкăшать. Вут çутинче ун сăнне лайăххах куртăм: вичкĕн пăхакан куçсем, пилотка айĕнчен сулахай куç харши çинелле çÿç пайăркисем усăнса тăраççĕ – харсăр сăн; çапах та ку харсăрлăх чуна шиклентермест, темле ырă туйăмпа хăпартлантарать.

– Сан пата «хамыръял» килчĕ, паллашăр, – терĕç ăна икĕ гвардеец харăсах.

– Астров, – терĕ палламан сержант ман алла хытă чăмăртаса.

Тепĕр сехетрен эпир пĕрпĕрне мĕн ачаран пĕлнĕ пекех хăнăхса çитрĕмĕр /ара, салтакăн йăли çавăн пек мар-и!/, калаçу та вара хĕрсех кайрĕ.

– Савни патне таврăнатăр пуль-ха? Çураçнă хĕр пулĕ? – ыйтрăм каччăран сăмах майăн.

Астров пĕр хушă каçхи тинĕс çинелле тунсăхлă куçпа пăхса ларчĕ, унтан ассăн сывласа илчĕ те йăлкăшса кулчĕ.

– Эх! Пĕлесчĕ эсир ман юрату çинчен!.. Сăмах майăн, каçарăр, эсир çыркалатăр пулас? Эпĕ сирĕн хушаматăра дивизи хаçатĕнче куркаланă. Çырасах тесен – çырса кăлармa та пултаратăр. Маншăн пурпĕрех. Каласа парасса... Эсир ыйтнăшăн мар... так ахаль, пулни-иртнине тепĕр хут йĕркипе аса илес килнĕрен çеç каласа паратăп. Чăнахах та çывăрас килмест пулсан, итлĕр эппин...

Ворончихинпа Курмангалиев пăтă çисенех пĕр шинельпе витĕнсе выртрĕç те çывăрса кайрĕç, кăвайт та пасăрах сÿнчĕ, сăвă-юрă та шăпланчĕ – ман сержант çаплах хăйĕн юратăвĕ çинчен калать.

Ун калавне эпĕ пĕр чĕнмесĕр итлесе лартăм. Пĕрре хĕрÿленсе, тепре пусăрăнса, пĕрре хитре тетте курнă пĕчĕк ачалла савăнса, тепре темĕнле пысăк хуйхă тÿснĕ çын пек хурланса калаçрĕ вăл.

Астров çине пăхса тĕлĕнсе кăна лартăм: мĕн тери юратма мăкăрланать.

– Комбат çак блиндажра! – терĕ мана связной. Блиндаж алăкне шаккарăм. «Кĕрĕр!» – тени илтĕнчĕ шалтан.

Пÿлĕмре ăшă. Урай варринче тимĕр кăмака кĕрлесе çунать.

Алăк патĕнче, кĕтесре, пĕр çамрăк ефрейтор, ординарец пулас, автоматне чĕркуççи çине хунă та кукленсе ларнă çĕртех харлаттарса çывăрать. Малти кĕтесре, снаряд ещĕкĕнчен тунă сĕтел хушшинче, хĕрĕхсенчен иртнĕ хаяр сăнлă çын ларать. Вăл батальон командирĕ иккенне тÿрех тавçăрса илтĕм. Кунта килнĕ чухне, çул майăн, связной мана çак командир пирки темĕн те пĕр каласа пачĕ. Вăл каланă хыççăн эпĕ пулемет лентисем çакнă, аллине пистолет тытнă паттăра курма ĕмĕтленсеттĕм, анчах пачах урăхла çынна куртăм. Комбат аялти шурă кĕпе вĕççĕн кăна: вăл, сĕтел çине сарса хунă карттă çине тимлĕн пăхса лараканскер, чапа тухнă командир пек мар, пĕр-пĕр географи учителĕ пек туйăнса кайрĕ; кăмака умне типĕтме çакнă гимнастерка кăна вăл кам иккенне аса илтерчĕ: гимнастерка çинче – майор пакунĕсем.

Эпĕ ăна хам çинчен пĕлтертĕм.

– Так, так, – терĕ вăл, хăмăр куçĕпе ман çине тăрăнса, – связист пулас тетĕр эппин? Пит аван. Хăш енчисем-ха?

– Чăваш Республикинчен.

– Так, так... Миçе çулта, мĕн чухлĕ вĕреннĕ?

– Вунтăххăрта... Çичĕ çул вĕреннĕ, майор юлташ!

– Сахалтарах... Пире вĕреннĕ çынсем ытларах кирлĕ. Ну, юрĕ. Комсомолец-и?

– Çук-ха, – тетĕп именсе.

Майор ман çине шăтарасла пăхнă май аллинчи кăранташĕпе сĕтеле шакка пуçларĕ.

– Хăш фронтра çапăçнă халичченн?

– Пĕрремĕш хут, майор юлташ, – тетĕп тата хытăрах именсе.

– Так, так... – терĕ те ыйхă тĕлĕшпе, обмоткăна час чĕркеймесĕр, пуринчен кая юлтăм.

– Интеллигенци! – терĕ тарăхнă старшина, – марш çаруран.

Обмоткăсене кĕсьене персе чиксе тухса сирпĕнтĕм. Çав каçран вара вăл мана пĕрре те канăç памарĕ. Мĕнле те пулин кăлтăк тупатех: е ман тÿме таталнă, е шинель хластикĕ çук, е автомат таса мар, е тата темтепĕр... Ман ситменлĕхсене çеç асăрхать тейĕн.

Гончарук старшина – вăрçăчченех çарта пулнă вăтă салтак, рядовойран старшинана çитнĕскер. Вĕренессе нумаях вĕренмен, тăвата çул кăна, çапах та ăслă хăй. Анчах темшĕн хăйĕнчен нумайрах вĕреннĕ салтаксене пурне те «интеллигенци» тет. Эпĕ хам япаласене тирпейлесе çитерменни хытă тарăхтарать ăна. «Интеллигенци! – тет вара, сарă майăхне туртса. – Кăтартăп сире образовани, котелок тасатма та пĕлместĕр!» Темшĕн вара мана «интеллигенци» тесе чĕне пуçларĕ.

Эпĕ фронта хам тантăшăмсемпе пĕрле лекеймерĕм. Малтан тылри полксенче пулкаларăм, анчах та çар йĕркине хăнăхсах çитеймерĕм пулас. Çавăнпа халь, фронта лексен, питĕ йывăр килчĕ. Тăраничен çисе те, çывăрса та курайма стăп, шалт аптрарăм. Вăл-ку хăяматнечĕ-ха, анчах чи йывăрри маншăн связист ĕçĕ пулчĕ. Телефон аппарачĕпе хăвăртах паллашса çитрĕм ĕнтĕ, çĕрпÿртре вĕренсе ларнă чух – çынсенчен кая мар темелле, анчах уя тухсан вара, лини çинче ĕçлеме тытăнсан, ниепле те ĕç тухасшăн мар мар. Кунта, ачам, хăнăху çук пулсан, старшина калашле, аслă шкул пĕтерни ниме те пĕлтермест. Юрать, юлташăмсем аван.

Хамăр отделенири икĕ салтакпа питĕ çывăх туслашрăм. Иккĕшĕ те ман пекех рядовой, анчах тахçантанпах фронтра çапăçаççĕ. «Тăвансем» теççĕ вĕсене батальонта. Чăнах та ĕнтĕ, вĕсем çав тери туслă, ырă кăмăллă, хастар каччăсем.

**/Малалли пулать/.**

*Чумизă – Маньчжурире ÿсекен тырă, вир майлăрах.

ПАРАД ИСТОРИЙĔ



# Çĕнтерÿн асамлă хăвачĕ

***Аслă Çĕнтерÿ кунне халĕ календарьте хĕрлĕ тĕспе паллă тăваççĕ. Чаплă çак уяв хăçантанпа канмалли куна çаврăннă-ши? Ăна Совет Союзĕнче тата Раççейре мĕнле паллă тăвасси йăлана кĕнĕ?***





### Пĕрремĕш

Аслă Çĕнтерÿ 10 çул тултарнине анлăн уявламан, Хĕрлĕ тÿремре нимĕнле парад та иртмен. 1955 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕ ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман ахаль ĕç кунĕ пулнă. Çĕршыв тĕрлĕ хулинче савăнăçлă пухусем, парксемпе тÿремсенче уяв концерчĕсем иртнĕ. Каçхине Мускавра, союзла республикăсен тĕп хулисенче, герой-хуласенче 30-шар залпран тытăнса тăракан салют тÿпене йăмăхтарнă.

Пĕрремĕш хут Çĕнтерÿ юбилейне Совет Союзĕнче 1965 çулта анлăн паллă тунă. Хăрушă вăрçăра çĕнтернĕренпе 20 çул çитнине халалласа пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнче "Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин инваличĕсен тата Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунă çар çыннисен çемйисен членĕсен хушма çăмăллăхĕсем" пирки СССР Министрсен канашĕ постановление алă пуснă.

Ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче вара СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ çу уйăхĕн 9-мĕшĕ канмалли кун пулни çинчен калакан указа алă пуснă. Юбилей умĕн çĕршывĕпех вăрçăпа, Çĕнтерÿпе çыхăннă монументсем çĕклеме пуçланă. Волгоградра Мамай курганĕ çĕкленнĕ – ăна 1967 çулхи юпа уйăхĕнче туса пĕтернĕ. Паллă мар салтакăн палăкĕн проекчĕн конкурсне пĕлтернĕ. Мемориала 1967 çулхи çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче уçнă.

Çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче "1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи Çĕнтерÿ 20 çул тултарни" юбилей медальне йĕркеленĕ, унпа 16 млн çынна чысланă. Юбилей тĕлне тĕрлĕ орден-медале вăрçа хутшăннă 33 пин çын тивĕçнĕ. Çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче СССР АК Президиумĕ "Герой-хула" хисеплĕ ят пирки йышăну кăларнă. Ăна чи малтанах Мускав, Ленинград, Волгоград, Киев, Севастополь тата Одесса тивĕçнĕ. Брест "Герой-крепоç" пулса тăнă.

Хĕрлĕ тÿремре вăрçă вĕçленнĕренпе пĕрремĕш хут çар тата техника парачĕ иртнĕ. Çĕнтерÿ Ялавне Хĕрлĕ тÿреме рейхстага штурмланă çĕре хутшăннă полковник, Совет Союзĕн Геройĕ Константин Самсонов йăтса тухнă. Унăн ассистенчĕсем запасри сержант, Совет Союзĕн Геройĕ Михаил Егоров тата запасри кĕçĕн сержант, Совет Союзĕн Геройĕ Мелитон Кантария пулнă – шăпах вĕсем 1945 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче рейхстаг тăрне ялав çакма пултарнă.

Парад вăхăтĕнче 13 çĕршыв ертÿçисем пулнă. Каçхи 9 сехетре Мускавра, союзла республикăсен тĕп хулисенче, герой-хуласенче тата ытти хулара 30 залпран салют кĕрленĕ. Шăпах 1965 çултан пуçласа пĕр полкра çапăçнисем Мускавра тата пысăк ытти хулара тĕл пуласси йăлана кĕнĕ.

### Парад вырăнне – çамрăксен манифестацийĕ

Çĕнтерÿ 30 çул тултарнине 1975 çулта паллă тунă. "Герой-хуласен" йышне Керчь, Минск, Новороссийск кĕнĕ.

Мускаври Кутузов проспекчĕнчи триумф арки çывăхĕнчи тавралăх "Çĕнтерÿ тÿремĕ" пулса тăнă. 14 млн çынна "1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи Çĕнтерÿ 30 çул тултарни" медальпе чысланă.

Хальхинче Мускава парад курма пÿрмен. Ун вырăнне Хĕрлĕ тÿремре çамрăксен уяв манифестацийĕ иртнĕ.

Çу уйăхĕн 8 тата 9-мĕшĕсенче социализмла 11 çĕршыв, Франци, АПШ тата совет правительстви ячĕпе Паллă мар салтакăн Вилтăпри патне чечек кăшăлĕсем хунă.

### Ветерансем тата фильмсем

Çĕнтерÿ 40 çул тултарас умĕн экрансем çине Юрий Озеровăн "Битва за Москву", Элем Климовăн "Иди и смотри" фильмĕсем тухнă.

"1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи Çĕнтерÿ 40 çул тултарни" медальпе 11 млн ытла çынна хавхалантарнă. Çапăçăва хутшăннисене I тата II степень Тăван çĕршывăн вăрçин орденĕсемпе чысланă. "Герой-хуласен" йышне Мурманск тата Смоленск хулисем кĕнĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 40 çул çитнине халалласа ирттернĕ парадра ветерансем уйрăм колоннăпа утса иртнĕ.

Каçхине çĕршыври 30 ытла хулара 40 залплă салют тÿпене йăмăхтарнă.

### Саккун, мемориалсем...

1993 çулта, Çĕнтерÿ çур ĕмĕр тултарнине уявлама хатĕрленнĕ май, юбилей медальне 19,5 млн экземпляр кăларса хатĕрленĕ. 1995 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче Борис Ельцин "Ветерансем çинчен" саккуна алă пуснă – унпа килĕшÿллĕн вăрçа хутшăннисен категорийĕ анлăланнă, çăмăллăхĕсем йышланнă. Уяв тĕлне çĕнĕ мемориалсемпе палăксем çĕкленнĕ. 1995 çулхи çу уйăхĕн 3-мĕшĕнче Прохоровка танк çапăçăвĕн музейĕ хута кайнă. Манеж тÿремĕнче Совет Союзĕн маршалĕн Георгий Жуковăн палăкĕ уçăлнă. Пултаруллă полк ертÿçине чысласа Санкт-Петербургра тата маршал çуралнă тăрăхра, Калуга облаçĕнчи Жуковка ялĕнче, палăксем çĕкленнĕ. Мускавра Çĕнтерÿ мемориалĕ тата Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин Тĕп музейĕ уçăлнă.

Çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче Санкт-Петербургра тинĕс-çар парачĕ иртнĕ. Çĕршыв историйĕнче пĕрремĕш хут пулнă кун пекки – парада нимĕç фашисчĕсене хирĕç кĕрешнĕ коалици карапĕсем те хутшăннă.

1957 çултанпа парада хутшăнман авиаци каллех тÿпене самолетсем çĕкленĕ.

Уява ПНО Тĕп секретарĕ Кофи Аннан тата 56 çĕршыв ертÿçи хутшăннă. Раççее чикĕ леш енчен 3 пин ытла хăна килсе çитнĕ. Вĕсен йышĕнче Балти тăрăхĕнчи çĕршывсем кăна пулман: Латви, Эстони, Литва...

Каçхине Мускавра тата 16 хулара 50 хутчен уяв залпĕ кĕрленĕ.

### "Георгий хăйăвĕ"

2005 çулта Раççей хаяр тăшмана çĕнтернĕренпе 60 çул çитнине паллă тунă. Хуласенче Çĕнтерÿ мемориалĕсене, палăксене юсаса çĕнетнĕ. Çу уйăхĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа çĕршыв ертÿçин указĕпе килĕшÿллĕн вăрçă ветеранĕсене хушма укçа тÿлеме тытăннă. 9 млн ытла юбилей медалĕ хатĕрленĕ.

2005 çулхи ака уйăхĕнче пуçласа "Георгий хăйăвĕ" общество акцине йĕркеленĕ. Çĕнтерÿ кунне халалланăскерне ирттересси халĕ йăлана кĕнĕ – ăна çулсеренех ака уйăхĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа çу уйăхĕн 2-мĕшĕччен йĕркелеççĕ. Волонтерсем çак тапхăрта 30 çĕршывра 45 млн хăю салатнă.



А.ИЛЬИНА сăнÿкерчĕкĕ.

Хĕрлĕ тÿремре иртнĕ парад икĕ пайран тытăнса тăнă – истори тата хальхи. Унта 7 пин çар çынни тата 2,6 фронтовик хутшăннă. Хĕрлĕ тÿрем çийĕн Раççей Сывлăш-Çарĕн 12 самолечĕ вĕçсе иртнĕ. НППП ертÿçисем, Азербайджансăр пуçне, пухăннă Мускава, чикĕ леш енчен – 53 патшалăх пуçлăхĕ.

Уяв савăнăçлă концертпа вĕçленнĕ. Мускавпа ытти пысăк хулара салют кĕрленĕ.

### Юбилей умĕн

Пĕлтĕр Мускавра Хĕрлĕ тÿрем çар техникин 151 единицине йышăннă. Самолетсемпе вертолетсен шучĕ вара Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 69 çул çитнипе танлашнă. Çар парадне РФ оборона министрĕ, çар генералĕ Сергей Шойгу йышăннă.

Çĕнтерÿ 69 çул тултарнине халалланă парада типĕ çĕр çар чăçĕсен Тĕп командующийĕ, генерал-полковник Олег Салюков ертсе пынă. 2014 çулхи Çĕнтерÿ маршĕнче çĕнĕлĕх те пулнă – Хĕрлĕ тÿремпе РФ хуралĕн федераци службин Мускав Кремлĕн коменданчĕн службин Президент полкĕн хисеплĕ эскорчĕ утса иртнĕ.

### Çĕнĕ çар палли

Çĕнтерÿ 70 çул тултарнине уявлама та маларахах хатĕрленме тытăннă. Ăна ирттерес тĕлĕшпе Владимир Путин 2013 çулхи ака уйăхĕн 25-мĕшĕнчех указа алă пуснă. Юбилей медальне те 2013 çултах хатĕрленĕ.

Кăçал та Çĕнтерÿ парачĕ йăлана кĕнĕ тăрăх Хĕрлĕ тÿремре иртнĕ. Халиччен хисенчен хăйĕн масштабĕпе палăрса тăнă вăл. Çĕнĕлĕхсем пуласса, чăн та, малтанах систернĕччĕ – унта çар çĕнĕ йышши техникине кăтартнă. Кремль çумĕнче пĕрремĕш хут çыран хĕрринчи ракета комплексĕсем "Бастион" тата "Бал", çĕнĕ йышши танк "Армата", çĕнетнĕ "Тайфун", БМП, тата БТР, "Коалиция-СВ" артиллери установки иртнĕ.

Парада хутшăннă тата ăна курма пухăннисен пуçĕ çийĕн 143 самолетпа вертолет вĕçсе иртнĕ. Хĕрлĕ тÿремре 18 пин çын çирĕппĕн пусса иртнĕ, вĕсен хушшинче – ют çĕршыв çарĕсем те: Раççей салтакĕсемпе юнашарах азербайджан та эрмен, белорус те казах, кăркăс та таджик... Серби, Монголи, Китай, Инди – кашнинех çар тумĕ те, парадра утас манерĕ те расна, анчах та тĕллевĕ пĕрре: вăрçа хирĕç, мирлĕ тÿпешĕн...

Çапах та тĕнче – парада нумайăшĕ телевизорпа курни кама иккĕлентерĕ? – "Армата" танкран куç илеймерĕ-тĕр. Кун пекки урăх никамăн та çук. Ытти танксем пĕр-пĕринчен питех уйрăлса тăмаççĕ. "Армата" экипажĕ кăна башньăра мар, ун умĕнчи броньăланă капсулăра вырнаçнă. Ятарлă броня пахалăхне шăтăр-шăтăр сивĕре те çухатмасть. Ку танкра ядерлă хирĕç-тăрура та хăрушă мар. Корпусне нумай сийлĕ кукăль пек тунă: хурçă, керамика, резина, хурçă... Унăн 125 миллиметрлă туппи те – хăйне евĕр. НАТО çĕршывĕнчи кăлараканнисенчен чылай хăватлăрах вăл. Тĕл перес енĕпе те ăна çитекенни çук. Паллах, оборона министерстви пĕтĕм вăрттăнлăха уçман. Электроника, хĕçпăшал, бронекапсула, механик ĕçĕ – çакă йăлтах уççăнлăх карти тепĕр енче юлнă. Комплектацине кура кирек мĕнле машинăна – БМП, САУ – çаврăнма пултаракан "Армата" пире ырă сунманнисен сехрине хăпартасси куçкĕрет.

"Коалици" те – хăйне май. Вăл снарядсем кăларса янă хыççăн вĕсем палăртнă тĕллеве çитиччен хăй пенĕ вырăнтан... тарса çухалма ĕлкĕрет! Мĕнле майпа шутласа кăларма пултарнă çак хăвăртлăха – патшалăх вăрттăнлăхĕ. Унпа усă курса 40 километран /чи нумайăн – 70!/ пеме пулать. Çакăн пек инçĕшрен пеме пултаракан хĕç-пăшал тĕнчере хальлĕхе урăх çук-ха.

Пехота çар машини тата "Курганец-25" бронетранспортер пеккине те хальлĕхе чикĕ леш енче шухăшласа кăларайман.

Парадра пурĕ техника 196 единицине кăтартнă.

"Эпир парад пуçланă чух мĕн пулнă пирĕн? – палăртнă шухăшĕсене каярахпа ветерансем. – Çурăм хыçне кутамкка çакнă пехота... Халĕ акă мĕнле хăватлă техника иртет Мускав урамĕсемпе. Тăван çĕршыва хÿтĕлекен вăй шанчăклă апла. Хăш-пĕр путсĕрĕн шухăшласа пăхмалăх пур..."



## ☺И-ХИ-ХИК☺

**– Анне, тухтăр çынсене ыраттарать вĕт-ха?**
**– Мĕн тăвăн ĕнтĕ – профессийĕ çавăн пек.**
**– Ăна хăйне вара хирĕç ыраттарма юрать-и?**
**– Çук паллах.**
**– Анне, манăн тухтăр пулас килет.**

* * *

**Малтан телевизор умĕнче апат çиеттĕм, халĕ – компьютер умĕнче. Пĕтĕмлетӳ: прогресс ăçталла – столовăй çавăнталла.**

* * *

**Психиатр патне кĕме черет тăраттăм – ун патĕнче шутра тăманни пирки справка илме. Черет ытла вăрăм пулнипе йăлт тарăхса çитрĕм – ниепле те лăпланса çитейменнине кура... шута илчĕç.**

* * *

**Гороскоппа эпĕ – Шывтăкан. ЖЭКран килекен квитанцисем те çакнах çирĕплетеççĕ.**

* * *

**Пĕр хĕр – теприне:**
**– Итле-ха, санăн дачунта çĕр каçмашкăн юлма юрать-и?**
**– Паллах, каç пулчĕ ĕнтĕ, халĕ ăçта каятăн?**
**– Эрешменсем çук-и унта – вĕсенчен питĕ хăратăп эпĕ.**
**– Çук, çĕленсем йăлт тытса пĕтерчĕç.**

* * *

**Амăшĕ пĕчĕк ывăлне ача садне пуçтарать. Лешĕ ним тусан та ăшă йĕм тăхăнасшăн мар.**
**– Эсĕ мĕн, хуçалăхна шăнтасшăн-им? – вăрçать амăшĕ. – Капла мана мăнуксемсĕр тăратса хăваратăн вĕт!**
**– Юрĕ... – ассăн сывлать шăпăрлан. – Мăнуксемшĕн чăтмах тивет...**

* * *

**Килте сахăр пĕтнĕ самантра кăна чей чăн-чăн тутине туйса илетĕн.**

* * *

**Пикесенчен хăшĕ-пĕри вĕсем хыççăн каччăсем "лавĕпех" чупнипе мухтанать. Çапла ĕнтĕ – йӳнни яланах илĕртет...**

* * *

**Французсем, кăмăлĕсем лайăх чух, пĕр кĕленчĕ хĕрлĕ эрех ĕçеççĕ. Япăх чух – иккĕ. Турăçăм, ĕнер манăн кăмăл мĕнле пулнă-ши?**

* * *

**Гаражра пурте усал сăмахпа вăрçăнаççĕ, мĕншĕн тесессĕн унта асамлă çав сăмаха каламасан пĕр гайка-болт та пăрăнмасть.**

* * *

**Ĕçре çĕнĕ тĕрĕслев кĕртрĕç – психиатр тата нарколог патĕнче пулмалла... Ахăртнех, йĕркеллĕ тата эрех ĕçмен çынсем кун пек шалупа ĕçлеме пултараймаççĕ тесе шухăшлаççĕ пуçлăхсем.**

* * *

**– Мĕн шыратăр эсир манăн кĕсьере?**
**– А-а-а... Шăрпăк...**
**– Ыйтма юрамарĕ-им?**
**– Вăтантăм...**

* * *

**– Тухтăр, тапăчки илмелле-и пĕрле?**
**– Мĕн тĕслине?**

* * *

**– Тухтăр!!! Тухтăр пур-и кунта?!**
**– Эпĕ тухтăр.**
**– Калăр-ха, медицина факультетĕнче вĕренме йывăр пулчĕ-и?**

* * *

**Супермаркетра туяннă панулми 4-мĕш эрне сĕтел çинче выртать – тин кăна улмуççи çинчен татса илнĕ пек. Çиме те хăратăп ĕнтĕ...**

* * *

**Ачасене тĕрĕс çулпа утма вĕрентетпĕр-ха эпир. Хамăр çав çулпа мĕншĕн кайманни пирки ыйтсан мĕн хуравламалла вĕсене?**

* * *

**"Кам пылакрах чуптăвать?" ыйтăма хутшăннă 500 хĕрарăмран 300-шĕ – "мăшăр", 200-шĕ "еркĕн" тесе хуравланă. "Пĕлместĕп" пĕр хурав та пулман...**

* * *

**– Иваново – хĕрсен хули теççĕ. Апла тăк каччăсен те пулмалла вĕт-ха...**
**– Паллах. Магадан.**

* * *

**Шпаргалкăсене укçа хучĕ çине çырăр – преподаватель вĕсене туртса илме тăни взятка ыйтса илниех пулать.**

* * *

**Аист вĕçет. Çăварĕнче тутăр. Унта вара – старик. Вĕçеççĕ, вĕçеççĕ...**
**Унтан старик аиста кăшт сĕртĕнет те:**
**– Ну, йышăн ĕнтĕ – çĕтсе кайрăмăр вĕт, – тет.**

* * *

**– Пурăнмалли тата мĕн чухлĕ юлнă манăн?**
**– Ку-ку, ку-ку, ку-ку...**
**– Тухтăр, эсир мĕн, ăсран тайăлман пулĕ?**

* * *

**"Пурин арăмĕ те – арăм пек, манăннин кăна пуçĕ нихăçан та ыратмасть", – тарăхать арçын сывăрмалли пӳлĕмрен упаленсе тухнă май.**

* * *

**Шалу 25000 пин тенкĕпе танлашсан тăвата уйăхра 100000 пухма пулать тесе шухăшлаттăм эпĕ çамрăк чух. Йăнăшнă иккен...**

* * *

**Пĕррехинче, сыпкаланăскер, кăткă тĕмми çине ӳкнĕ. Урăххине, тен, кăшласа ярĕччĕç, мана вара киле илсе çитернĕ.**



## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### *СУТАТĂП ПРОДАЮ*

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ пропаренные,** вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. Т. 8-960-307-31-51.

**3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, **керамзит.** Доставка по низким ценам. Т. 8-960-307-31-51.

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Доставка. Т.: 89033583021, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 89033468556.

**29.Опрыскиватели, окучники, косилки,** грабли, погрузчики, доильные аппараты. **Распродажа!** Доставка! Т.: 8-937-955-98-02, 8-937-375-80-95.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**37.**Ворота, калитки, **заборы,** навесы. **Ковка,** кровля, обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, metalservis21.ru

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Низкие цены. Т. 48-16-54.

**74.Керамблоки** вибропрессованные, пропаренные. Все размеры. Доставка. Т. 89176776846.

**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**133.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку,** столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 8-937-952-22-11.

**138.ОКНА, ТЕПЛИЦЫ, обшивка** домов, **двери** /сталь/. Гарантия 15 л. Скидки 40%. Т. 89196624097.

**143.ТЕПЛИЦЫ** от производителя – от 5950 руб. Т. 89276682828.

**170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.

**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.

**174.МОГИЛЬНЫЕ ОГРАДЫ, заборы, ворота** и др. изделия от производителя Т. 89276682828.

**180.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**295.Песок,** ОПГС, **щебень,** известь, асфальтную крошку, **навоз,** землю, **торф.** Доставка. Т.: 89196741016, 89603003816.

**296.ПЧЕЛОСЕМЬИ 3800 руб.** Т. 89613429059.

**299.УДОБРЕНИЕ** – аммиачную селитру /мочевину/. Т. 8 /8352/ 37-20-56.

**310.Распродажа б/у ЖБИ:** плиты покрытия, фундаментные блоки, перемычки, прогоны, фермы, лестничные марши. Изготовлено строго по ГОСТу. Возможна доставка. Т. 89613448801.

**318.ДОМ – в Вурнарском районе.** Т. 8-960-309-71-73.

**322.ПЕСОК, щебень, гравмассу, керамзит.** Доставка. Т. 89033220479.

**331.КОЗУ дойную Зааненской породы** с козлятами. Т. 8-906-382-15-21.

### *ТУЯНАТĂП КУПЛЮ*

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

**298.ПОРОСЯТ** – дорого, круглый год. Самовывоз. Т. 89063825331.

### *ПУЛĂШУ УСЛУГИ*

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 8-903-322-04-79.

**197.Бурение скважин на воду.** Опыт, качество. Т. 89656876888.

**246.Бурение скважин** на воду до 50 м. **Чистка** старых **скважин.** Т. 8-906-381-60-37.

### *ĔÇ РАБОТА*

**249.Требуются рабочие в свинокомплекс** в Ленинградскую область. З/п 1500 в день. Вахта. Подробно по т. 89278496359.

**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.

**344.Требуются КАМЕНЩИКИ** – с опытом работы и желанием зарабатывать – на стройку в г. Сыктывкар. Вахтовый метод. Оплата сдельная. Инструментами обеспечиваем. Проживание – бесплатно. Авансируется каждая неделя. Полный расчет в конце вахты. Т.: 8-967-475-71-33, 89634884055.



« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ
Чăваш ХĔРАРĂМĔ
Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА
Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службы 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:**
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:**
55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07
**Электрон почти:** hypar@mail.ru

Хаçатри рекламӑсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 15.05.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8277. Заказ 1825.